# Чухăн чăваша алмаз та, таса шыв та кирлĕ мар-шим? Шăпах вĕсем çиййĕн утса çӳретпĕр вĕт… • 4 стр.

*Анне, аппа та йăмăк, мăшăр… Эсир пуртан кил-çуртăм ăшă*


ХЫПАР

1997 çулхи январĕн 30-мĕшĕнче тухма пуçланă

# Чăваш хĕрарăмĕ

12(882) №, 2015, апрель/ака, 4

Хакĕ ирĕклĕ. 16+

Хаçата электронлă адреспа та çыру çырма пултаратăр: zuwxeraram@mail.ru.



• Пире… упăте çăлса хăварĕ-ши? 5 стр.

• Ачаллă çемьесене мĕнле пособисем тивĕçеççĕ? 8 стр.

• Шурă кĕпе тăхăнас ĕмĕт çухалчĕ. 9 стр.

• Чапа тухнă пултарулăх çыннисем хăварт ватăлмаççĕ. 11 стр.


ÇĂЛТĂР ÇӲПÇИ

## Ĕç мар, кĕвĕçӳ пĕтерет



Алексей ШАДРИКОВ, юрăç

Пурнăç паян пĕртте япăх мар. Тепĕр чухне пирĕн халăх ытлашши нăйкăшнă пек туйăнать. Çынна нихăçан та нимĕн те çитмест, ăна нумайрах, ытларах, чаплărах кирлĕ. Ялтисем кӳршĕрен тăрса юласшăн мар. Пĕр енчен çакă лайăх та, çавна пулах кермен евĕр çуртсем çĕкленеççĕ. Эпир пĕчĕк чухне пирĕн урамра икĕ çемьере кăна килти телефон пурччĕ. Машинăсене вара пӳрнепе шутласа кăларма та пулатчĕ. Халĕ кашни çыннăн аллинчех – мобильник. Пĕрре кăна та мар. Чылай килте икшер-виçшер машина. Ялтисем автобуспа çӳреме те пăрахрĕç, хулана такси тытса вĕçтереççĕ. Халăх куллен кăлпасси, канфет çисен те кăмăлсăр. Тем çитмест ăна ялан. Лайăх пурнăç иртĕхтерет тесе ахальтен каламан пуль çав.

Ĕç çук тенипе те килĕшес килмест. Пĕр фермера лайăх пĕлетĕп. Ачи аван, çĕр ĕçне юратать. Мăян айĕнче ларакан анасем чунне ыраттарнăранах унта тырпул, пахча çимĕç çитĕнтерме пуçларĕ. Çыннисене укçине те лайăх тӳлет, апатне те çитерет. Ан ӳркен кăна. Анчах та ун патне ĕçлеме çӳрекен çук. Кĕвĕçнипе, вăл лайăххах пурăнса каясран хăранипе. Кутамкка çакса темиçе уйăхлăха пĕлмен хуçа патне шапаша каяççĕ, анчах та пĕр ял çынни патĕнче тар тăкма килĕшмеççĕ. Кунтах юлсан укçи те килет, çемйи те çумра пулать. Çук вĕт, фермер пуйса каясси хăратать.

Çынна хыткукарлăх пĕтерет. Çавна пула вăл хăй тавраристене те, тăванĕсене те, кӳршисене те асăрхами пулать. Укçа ĕçлесе илес – шухăшпа кăна пурăнакан çын – кичем. Ăна пурнăçра çав хутсăр пуçне урăх нимĕн те кăсăклантармасть. Шел те, халăх чунсăрланса пырать. Шупашкар районĕнчи пысăк пĕр ялта пулнăччĕ. Çурчĕсем тĕлĕнмелле чаплă, çынсем лайăх пурăнаççĕ. Анчах çак ялта та, ун çывăхĕнче те клуб çук. Ишĕлсе анайман пĕр йывăç çурт ларатчĕ, вăл та пулин хупă. Культура çурчĕ те, шкул та пулмасан ял пĕтет. Майĕпен пурте хулана тараççĕ.

Ачасене те ытлашши ачашлама пуçларăмăр. Паян вĕсене вăрçма та, ĕçлеттерме те юрамасть-мĕн. Эпир шкул вăхăтĕнче çĕрулми ани çинче упаленнĕ кăна. Никама та нимĕн те пулман, пĕри те аманман.

Йăлтах хура сăрăпа витес мар-ха. Хула ачисем, 16-18 çулсенчи çамрăксем, чăвашла юрăсем итлени савăнтарать мана. Шкулта чăвашла вĕрентнин витĕмĕ те пур кунта. Ан тив, ан калаçăр вĕсем, чи кирли – ăнланаççĕ. Ку чĕлхе апла вĕсене çывăх. Апла пĕтместпĕр эпир нихăçан та.


2 стр.





# "Хыпарçăсем" – чăн-чăн чăваш çĕрĕнче

**Иртнĕ ытларикун "Хыпарçăсен" пĕр ушкăнĕ кӳршĕллĕ Тутарстана çула тухрĕ. Вăл тăрăхра пĕр хутчен кăна мар пулнă-ха чăваш журналисчĕсем. Хальхи çулçӳреве вара "Хыпар" хаçат тухма пуçланăранпа 110 çул çитнине халалларĕç. Чăваша пĕрлештерсе тăракан çак хаçат Муркаш тăрăхĕнче çуралнă Николай Никольский ăсчах тăрăшнипе кун çути курнă. Пултаруллă чăваш Хусанти Ар масарĕнче ĕмĕрлĕх канăç тупнă. Шăпах унăн вилтăприне çитсе пуç тайрĕç «хыпарçăсем».**

### Парăнман – чалăшман…

Малтанах "Хыпар" Издательство çурчĕн директорĕ-тĕп редакторĕ Валерий Туркай Николай Васильевич Никольские вышкайсăр пысăк пĕлтерĕшлĕ ĕçĕшĕн – пăтравлă та кăткăс саманара чăваш халăхĕ валли хаçат кăларма пуçланăшăн – тав турĕ. Ĕçĕ вара чăнах та çăмăл мар, укçи-тенки те кирлĕ, пултаруллă çынсене те тупса явăçтармалла... Пĕрре çуралса вăй илнĕ "Хыпар" вара тухать. Çĕнелсех пырать. Ку кăна та мар, йыш хушма та пултарчĕ вăл: "Хыпар" варĕнче ытти кăларăмсем тĕвĕленчĕç, çуралса тĕнче тăрăх саланчĕç: "Çамрăксен хаçачĕ", "Чăваш хĕрарăмĕ", "Сывлăх", "Кил-çурт, хушма хуçалăх"...

– Пархатарлă ĕçӳ манăçмĕ, чăваш халăхĕн чун-чĕринче ĕмĕр-ĕмĕр пурăнĕ, – терĕ Валерий Владимирович.

Чăваш халăх поэчĕ Порфирий Афанасьев Николай Никольские ырăпа аса илчĕ. Хăй Никольскипе хутшăннине каласа кăтартрĕ.

"Хыпарта" нумай çул ĕçленĕ Сергей Карягин хаçат никĕçлевçи çут тĕнчерен уйрăлнăранпа 55 çул иртнĕ пулин те ун патне сукмак курăкпа витĕнменнине палăртрĕ.

Николай Никольскийĕн ячĕ пархатарлă ытти ĕç тума та хавхалантарать. Тутар чăвашĕсем валли тухса тăракан "Сувар" хаçатшăн та ку – сăваплă ырăн. Çакăн çинчен "Хыпар" тусĕ, маларах вара хăй те редакцире ĕçленĕ Петр Сидоров сăмах хускатрĕ.

Татьяна Степанова, Николай Никольский музейĕн ертӳçи, хисеплĕ ентешĕн сумлă ĕçĕсене аса илчĕ, вăл Муркаш ачисемшĕн ырă тĕслĕх пулнине палăртрĕ.


**Тăванăм, вулаканăм!**

**"Чăваш хĕрарăмне" çитес çурçуллăхра илсе тăмашкăн çырăнтарас тапхăр малалла пырать. Унăн хакĕ кăшт ӳсрĕ – 360,66 тенкĕпе танлашрĕ. "Хыпарăн" çĕнĕ хакĕ – 798,06 тенкĕ /эрнекунхи – 345,54 тенкĕ/. Анчах та çакă пирĕн çыхăнăва татмасса шанас килет. Укçа-тенке перекетлес тесен "Чăваш хĕрарăмне" "Чăвашпичет" киоскĕсенче çырăнма пулать: 222 тенкĕ.**



ÇУЛÇӲРЕВ

# “Хыпарçăсем” – чăн-чăн чăваш çĕрĕнче



**Юлашки çыравăн официаллă пĕтĕмлетĕвĕ тăрăх паян Тутарстанра 116 пин чăваш пурăнать. 300 ялта 183 экземпляр “Чăваш хĕрарăмĕ” хаçат саралать...**

**/Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 1-мĕш стр./.**

Виктор Егоров Хусан чăвашĕсен ячĕпе сăмах илчĕ, хăйсем Николай Никольские лайăх пĕлнине каласа кăтартрĕ.

“Хыпар” тĕп редакторĕн çумĕ Геннадий Максимов Николай Никольскин палăкне калăпланă тапхăра таврăнса унăн авторне Петр Пупина ырă сăмахпа аса илчĕ. Ăна вырнаçтаракансем те тăрăшни куçкĕрет – палăк çирĕп ларать, ун çине йывăç ӳксен те парăнман – чалăшман. Никольский сăнарĕ те халăх асĕнче çаплах çирĕп упранĕ: ачисене – ĕçĕсене – пула вăл халăх историйĕнче тарăн тымар янă. Çавăнпа вăйлă çил вĕрсен те, самана улшăнсан та тымарĕсене пула ăсчахăмăр ячĕ чăваш чунĕнче яланлăхах вырнаçнă.

## Ирĕксĕрлĕхре çуралнă йĕркесем

Чăвашран çитнĕ делегаци тутар паттăр поэчĕ Муса Джалиль палăкĕ патĕнчен те пуç таймасăр иртмерĕ. Унăн ячĕ те шăпах хăйĕн вилĕмсĕр хайлавĕсене пула ăруран ăрăва куçать. Джалиле нумай çул сутăнчăк тесе айăпланă. Поэта хăй ирĕксĕрлĕхре çырнă сăввисем çăлса хăварнă. Анчах та поэт фашистсен тĕрминче чунпа кăна мар, юнпа çырнă йĕркесене Хусана çитерме май тупсан та вулакан аллине тӳрех лекмен вĕсем. Шăпах “Моабит тетрачĕсем” Муса Джалиль сутăнчăк маррине, вăл Тăван çĕршывăн чăн-чăн патриочĕ пулнине ĕнентернĕ, поэтăн таса ятне тавăрма пулăшнă. Моабитра çырнă йĕркесене ку таранччен 60 ытла чĕлхепе пичетленĕ. Чăвашла вĕсене халиччен 14-ăн куçарнă. Валерий Туркай та хăй куçарнă йĕркесене 2014 çул вулакан патне кĕнеке хальлĕн çитернĕ.

## “Хаçат çырăнтарăвĕ – халăх çыравĕ”...

Чăваш Енрен çитнĕ хăнасене каярахпа Тутарстанри Халăхсен Туслăх çуртĕнче “Салам” ушкăн чăваш юррипе кĕтсе илчĕ.

Тутар тăрăхĕнчи йăхташăмăрсен пурнăçĕпе наци культура автономийĕн ертӳçи, тĕлĕнмелле пултаруллă та çивĕч чăваш арĕ Константин Яковлев паллаштарчĕ. Вăт ăçта кĕрлет вăл – чăваш пурнăçĕ! Маттурсен ĕç-хĕлĕ пирки çырса кайиччен статьяна мĕншĕн çапла ят панине те ăнлантарам – Тутарстанри йăхташăмăрсен шухăшĕпе, вĕсем шăпах чăн-чăн чăваш çĕрĕнче пурăнаççĕ. Пĕрремĕшĕнчен, халăхăмăрăн ятне çӳле çĕкленĕ мĕн чухлĕ Улăп тухнă ку тăрăхран! Иккĕмĕшĕнчен, чăваш чĕлхине, йăли-йĕркине, культурине – халăх ятне тесе вула – упраса хăварас тата аталантарас тесе мĕн кăна туса ирттермеççĕ унта! Çитменнине – укçине те хăйсемех тупаççĕ, çакăншăн шалу та илмеççĕ. /Хамăрăн культура тытăмĕн чиновникĕсене тутар чăвашĕсенчен вĕренмешкĕн пĕрер уйăхлăха кăларса ямалла. Çук, ĕçлеме е справка çырмашкăн хăнăхма мар – чăваша юратма, упрама, хисеплеме вĕренмешкĕн.../

Тĕрĕссипе, вĕсем мĕн ĕçленине тĕпĕ-йĕрĕпе çырса кăтартма хаçат страници те çитмĕ. Çавăнпа кĕскен кăна асăнса тухам. Кӳршĕ республикăри 27 районта кашнинчех наци автономийĕн представительствине йĕркеленĕ. Пĕрлехи ĕç планĕпе килĕшӳллĕн пулса пыраççĕ мероприятисем. Республикăра 300 ытла чăваш ялĕ. Йăлана кĕнĕ уявсем – Учук, Уяв, Акатуй, “Чăваш шăпчăкĕ”, “Выля, купăс”, ял кунĕсем, чăваш çыравçисем хăйсен журналне кăларса тăраççĕ – “Шурăмпуç”... Унсăр пуçне спорт ăмăртăвĕсем иртеççĕ: “Кĕрешӳ”, ЧНКА Кубокĕшĕн... Ку та сахал пек туйăннă курăнать. “Илемлĕ чăваш ялĕ” – çак ятпа ака уйăхĕн 15-мĕшĕнче çĕнĕ конкурс вăй илет. Йăлтах шута илĕç унăн çĕнтерӳçине палăртнă чух – çуртсене чăваш тĕррипе илемлетнине те, виçĕ чĕлхелĕхе /тутар, вырăс, чăваш/ мĕнле пăхăннине те, тăван йăла-йĕркепе çыхăннă мероприятисем ирттернине те. Пĕр сăмахпа, çĕнтерме – мала тухнăшăн вара укçан преми палăртнă, унăн виçи пĕчĕк мар – çăмăл пулмĕ.

Кăçалах Тутарстанри чи лайăх шкула – унта вĕренӳ 90 заведенийĕнче чăваш чĕлхине шĕкĕлчеççĕ – палăртĕç. Кунта та тĕп условисем йăлт чăвашлăхпа çыхăннă.

Вĕренӳре “пиллĕкпе” кăна ĕлкĕрсе пыракан ачасен слетне ирттересси йăлана кĕнĕ. Унта 100 чи лайăх ача хутшăнать. Паллах, вĕсен чăвашла таса калаçмалла...

Çак мероприятисене йăлтах хăйсен вăйĕпе йĕркелесе пыраççĕ тутар чăвашĕсем. Тутарстанри чăвашсен наци культура автономийĕ – общество организацийĕ! – шкулсенче вĕренӳ пӳлĕмĕсене сĕтел-пуканпа, ытти оборудованипе хăй тивĕçтерет. Тĕлĕнсе каймалла вĕт. Чăнласах маттур йăхташăмăрсем. Ахальтен мар ĕнтĕ кӳршĕ республика ертӳлĕхĕ ытти халăхсен пĕрлĕхĕсене чăвашсенчен тĕслĕх илме сĕнет.

*ТЕМĂРАН ПĂРĂНСА. Чăнласах та акă вăл – чăвашлăх утравĕ. Акă ăçта кирлĕ чăвашла пĕлни! Çук, кунта мар. Кунта чăвашла пĕлнипе никама та тĕлĕнтереймĕн, никам та сана уншăн – аçу-аннӳ чĕлхипе калаçнăшăн, пин-пин çул упранса юлнă, йăхран йăха куçнă йăла-йĕркене малалла тăснăшăн – ырă сăмах каламĕ. Пачах урăхла! “Çынна ретлĕ калаç!” – тенине илтме сахал тӳр килнĕ-и? Чăвашлăхшăн антăхакан, унсăр сывлăшсăр пекех касăхакан çынсене çавăнпах тухса çӳреме, аякри йăхташăмăрсем патне çитсе курма сĕнетĕп эпĕ яланах. Шăпах вĕсенче тапса тăрать тăван юнăмăр. Кунта, шурă Шупашкарта кĕрлесе-вĕресе тăмалла чух... Вĕсен, аякрисен, пирĕн пата килсе вăйхăват пухса каймалла чух...*

Юрĕ, ку – уйрăм калаçу. Константин Яковлевăн чун ыратăвне те вулакан патне çитерес килет. Улăпăмăр, чăваша вулама-çырма вĕрентнĕ çыннăмăр Иван Яковлевич Яковлев çуралнă ял Кăнна Кушки пăшăрхантарать ăна. /Пĕр тесен, пĕрлехи çырулăх йĕркеленмен тĕк, кам пĕлет, анатри тата тури чăваш, тен, тахçанах пĕр-пĕрне ăнланми пулнăччĕ – çармăссем пек?/ Кăнна Кушки чăвашшăн Мекка шайĕнче пулмалла! Унта кашни чăвашăн çитсе çав сывлăшпа хавхаланмалла. Çак тĕллеве пурнăçа кĕртес енĕпе тутар чăвашĕсем ĕçлеме пуçланă та ĕнтĕ. Республика ертӳлĕхĕ те çак ыйтуран аякра юлмасса шанас килет.

Тутар халăх поэчĕ Ренат Харис та Хусан чăваш культуришĕн хăйне евĕр утрав пулнине палăртрĕ. Вăл калаçнă май “Хыпара” хăшĕ-пĕри “ытлашши чăвашла çырнăшăн” тиркени аса килчĕ. Ренат Харис вара Ашмарин словарĕ пирки сăмах хускатрĕ: “Мĕн тери пысăк пуянлăх пур сирĕн!” “Унпа усă курса çырма пуçласан вара пире вулакан пачах та ăнланма пăрахĕ”, – мĕлтлетрĕ пуçра шухăш. Шел те, паян кулленхи калаçура вышкайсăр пуян чĕлхемĕрĕн чи пĕчĕк пайĕпе усă курасси кăна сыхланса юлчĕ вĕт...

Халăхсен туслăхĕн çурчĕн ертӳçин Ирек Шариповăн, сăмах май, хăй вăл удмурт çынни, сăмахĕсем вара пуçăма çапса кĕртсе лартнă пек вырнаçса юлчĕç: “Пирĕн тымарсем – кунта. Атте-аннене те, Тăван çĕршыва та суйламаççĕ. Çавăнпа та çынна çуралнă кĕтесре пурăнма чи хăтлă условисем туса памалла – тата лайăхраххине шыраса ан çӳретĕр вăл. Эсир хаçатра ĕçлетĕр. Маншăн та ют мар ку ĕç. Манăн шухăшпа, çырăнтару – халăхăн хăйне евĕр çыравĕ. Тираж мĕн чухлĕ – халăх йышĕ те çавăн чухлĕ. Общество тулашĕнче аталанаймĕ çын”. Мĕн тери тĕрĕс сăмахсем! Тăван чĕлхепе вуламан-калаçман çын çинчен çав халăхăн представителĕ теме пулать-и вара?

Ирек Ильдусович хăй “Нарспи” поэмăна мĕнле вуланине те аса илчĕ. Валерий Туркай аллинче курнă та кĕнекене, тытса пăхма шухăшланă. Анчах... чăваш каччипе хĕрĕн таса юратăвĕ туххăмрах тыткăнланă ăна. Йĕрке хыççăн йĕрке, сыпăк хыççăн сыпăк... Каярахпа çак кĕнекене тупса туяннă. Юлташĕсем вăл мĕн вуланипе кăсăкланнă. Çапла “Нарспи” алăран алла куçнă... “Чăваш чунне ăнланас тесен “Нарспи” поэмăна вуламалла”, – пăнчă лартрĕ Ирек Шарипов. Çакăн çумне хушса урăх мĕн калайăн?

**Рита АРТИ.**

Василий КУЗЬМИН сăнӳкерчĕкĕсем.







ПРАВИТЕЛЬСТВĂРА

# Çыхăну йĕркеленĕ

Висĕмкун ЧР Пуçлăхĕпе Михаил Игнатьевпа правительство членĕсем Кăркăс республикинчи Жалал-Абадск облаçĕнчен килнĕ делегаципе тĕл пулнă.

– Чăваш Ен – усă регион. Эсир пирĕн предприятисемпе паллашни икĕ енлĕ хутшăнăва аталантарма пулăшĕ. Евросоюз Раççее хирĕç кĕртнĕ санкцисем Киргизипе тата НПППн ытти патшалăхĕпе тачă çыхăну йĕркелеме çĕнĕ майсем параççĕ, – тенĕ ЧР Пуçлăхĕ.

Кăркăс Республикин Правительствин Жалал-Абадск облаçĕнчи представителĕн заместителĕ Мамасалы Акматов Чăваш Енри электротехника предприятийĕсем кăларакан мĕнпур тенĕ пек продукци Кăркăсра кирлине пĕлтернĕ.

Çавăнпах тĕлпулура малашне çыхăну йĕркелесси, тĕрлĕ килĕшĕве алă пусасси пирки калаçнă.

**Татьяна НИКОЛАЕВА.**

ЫРĂ ПУЛĂМ

# Канаш аталанĕ

Юлашки çулсенче Раççейри хуласене патшалăх пулăшăвĕпе пайăррăн аталантарасси вăй илет. Кун пек çăмăллăхпа халиччен республикăри икĕ хула – Çĕнĕ Шупашкарпа Улатăр – усă курнăччĕ.

Кăçал çакăн йышши пулăшăва Канаш тивĕçнĕ – вăл Раççейри 5 монохула йышне кĕнĕ.

Çак эрнере ЧР Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев «Монохуласене аталантармалли фонд» генерльнăй директорĕпе Дмитрий Скривановпа тĕл пулнă. Тĕлпулăва ЧР Министрсен Кабинечĕн Председателĕ Иван Моторин та хутшăннă. Унта монохулана аталантармалли тĕп килĕшĕве алă пуснă.

Канаш инвестици проекчĕсене пурнăçлама 605,525 млн тенкĕлĕх пулăшупа усă курĕ. Пурнăçа кĕртме хальлĕхе 9-шне хатĕрленĕ. 2020 çулччен 3,7 млрд тенкĕлĕх инвестиципе усă курса Канашра 2 пине яхăн ĕç вырăнĕ йĕркелеме палăртаççĕ.

**Татьяна НАУМОВА.**

СЫВЛĂХ

# Усал шыçса парăнтарма

Иртнĕ эрнере Шупашкарти Гладков урамĕнчи 27-мĕш çуртра усал шыçăпа чирлĕ хĕрарăмсен психологи пулăшăвĕн центрĕ уçăлчĕ. Республикăри онкологи диспансерĕн тĕп тухтăрĕ Лидия Воропаева тата Хĕрарăмсен канашĕн ертÿçи Ольга Зайцева сиплевпе физкультура комплексĕн залне, физиотерапи, релакс тата тренинг пÿлĕмĕсене кăтартса çавăрнчĕç. Сĕтел-пукана, спорт тата медицина оборудованине грант укçипе туяннă. Çакăнта пурне те тÿлевсĕр йышăнĕç. Аса илтеретĕп, республикăри Хĕрарăмсен канашĕн «Пурнăçшăн» проектне федераци шайĕнче ырланă, çакăншăн 1500000 тенкĕ уйăрнă.

Реабилитаци центрĕнче операци хыççăн вăй илме пĕтĕм услови пур. Тĕслĕхрен, ал ĕçĕпе аппаланма пулать. Çакăнтах стилистсем, визажистсем, парикмахерсем ăсталăх класĕсем ирттерĕç. Ушкăнпа куравсене, театра, бассейна çÿрени те савăнăç кÿрĕ.

Усал шыçса май пур таран маларах тупса палăртсан чире çĕнтерме çăмăлрах. Лидия Воропаева каланă тăрăх, çитес вăхăтра маммограф комплексĕллĕ машина республикăн районĕсемпе хулисене çитĕ. Пысăк предприятисемпе организацисенче тăрăшакан хĕрарăмсем ĕç вырăнĕнчех тĕрĕсленме пултарĕç.

Пĕтĕмĕшле илсен, республикăри онкологи диспансерĕ 23 пин çынна пăхса-тĕрĕслесе тăрать, вĕсенчен 60 процентĕ – хĕрарăмсем. Пĕлтĕр кăна усал шыçăпа нушаланакан 3774 çынна шута илнĕ.

«Пурнăçшăн» центр тунтикунран пуçласа эрнекунччен 8-тан пуçласа 19 сехетчен ĕçлĕ. Шăматкун хĕрарăмсене 9-15 сехетсенче йышăнĕç.

Центр уçăлнă хыççăн республикăри хастар хĕрарăмсен канашлăвĕ пуçтарăнчĕ. Ку ĕçе Ашшĕсен канашĕн членĕсем те хутшăнчĕç. Çак мероприятие Чăваш Ен хĕрарăмĕсем II съезда пуçтарăннăранпа 50 çул иртнине халалланă.

Ольга Юрьевна Хĕрарăмсен канашĕн ĕçĕ-хĕлĕпе паллаштарчĕ, социаллă проектсем çинче чарăнса тăчĕ. Сусăрсене, аутизмпа чирлĕ ачасене, йĕплĕ пралук леш енчен киле таврăнакансене, ĕçке ернисене пулăшас тĕлĕшпе тĕрлĕ проект пурнăçланса пырать. Унсăр пуçне «Ырă-лăх хăвачĕ» акци вăхăтĕнче Украинăран куçса килнисем валли 2 миллиона яхăн тенкĕ пуçтараннă.

**Марина ГРИГОРЬЕВА.**

ЙĔРКЕСĔРЛĔХ

# Чир явапсăрлăха пула сарăлать

Уртаракан чирĕпе çыхăннă лару-тăру республикăра халĕ те çивĕч-ха. Çакна юлашки фактсем те çирĕплетеççĕ. Нарăс уйăхĕнче кăна Раççейре çак мурпа аптăранă 344 тĕслĕхе шута илнĕ. Шухăша яраканни кунта акă мĕн – пуринчен ытла Тутарстанра /29 тĕслĕх/ асăннă чир вучахĕсем палăрнă. Асăннă республика вара – пирĕн чи çывăх кÿршĕ.

Шел те, хăш-пĕр чухне çынсем хăйсем çийĕнчех кирлĕ мерăсем йышăнманни те чире вăй илме пулăшать-тĕр.

Нумаях пулмасть Россельхознадзорăн республикăри управленийĕн инспекторĕсем шăпах çакнашкал темиçе тĕслĕхе уçăмлатрĕç. Шупашкар районĕнчи Чаканар ялĕнче йытă виллине ÿплипе пĕрле çунтарса янă. Каплла тума юрамасть паллах. Тĕрлĕ чир сарăлассинчен сыхланас тесен хăть мĕнле чĕрчун виллине те лабораторире тĕпчемелле. Чаканарта вара уртаракан чирĕн паллисем пулнă, анчах та йытă виллине лабораториĕçчĕнĕсене кăтартмасăрах тĕп тума васканă.

Чир çаклатма пултарнă тесе шутлакан йытăсене ветспециалистсен тĕрĕслемелле. Тĕрĕссипе, иккĕленÿ çуратакан чĕрчунсене 10 кун сăнаса тăмалла, вĕсене вакцинаци тума та юрамасть.

Тĕрĕслев ытти çитменлĕхсене те тăрă шыв çине кăларнă: уртаракан чиртен тăвакан вакцинацишĕн çынсен тÿлеме тивнĕ.

Ишек ветучастокĕ ача сачĕн çуртĕнче вырнаçнине те тимлĕхсĕр хăварайман. Унта пĕлтĕртенпе чирлĕ чĕрчунсене регистрацилемелли журнала та çырса пыман-мĕн.

Етĕрне районĕнчен килнĕ çыру тăрăх та тĕрĕслев пулчĕ. Ку лару-тăру та çÿлерех çырса кăтартнă тĕслĕхе аса илтерет: унта тилĕ вилли лабораторие çитеймен.

Чир тухнă вырăнта амака сарăлма парас мар тĕллевпе ятарлă мероприятисем ирттерессине йĕркелес тĕлĕшпе оперативлă ĕçлемелли – Раççей шайĕнчи çивĕч ыйту. Ветеринари енĕпе ирттернĕ тĕрĕслевсем çакна яр-уççăн çирĕплетеççĕ. Çитменлĕхсен йышĕнче çаксене те палăртмалла: карантин йĕркисене çирĕплетесси çинчен калакан представление тăратассин вăхăтне пăхăманни; карантин йĕркисене çирĕплетесси çинчен калакан йышăнăва вăя кĕртессин вăхăтне тăсни е пачах та кунашкал йышăну хатĕрлеменни; карантин чирĕсен вучахĕсенче тĕп тăвассипе çыхăннă мероприятисене ирттерессине тĕрĕс йĕркелеменни тата ытти те.

Сисчĕвлемле сăлтав чăнах та пур. Раççей территорийĕнче ветеринари надзорĕ енĕпе çырса хатĕрленĕ протоколсен шучĕпе Атăлçи федераци округĕ /АФО/ 2014 çулта лидерсен шутне лекнĕ. Тĕрĕслевпе надзор мероприятийĕсен шучĕпе вара АФО – пĕрремĕш вырăнта. Йĕркене пăснине пĕтерме хушса çырнă представленисен шучĕ округра 2502-ех çитнĕ.

Сăмах май, пĕлтĕр Раççейре шалти ветеринари надзорĕ енĕпе пĕтĕмпе 51400 тĕрĕслевпе надзор мероприятийĕ йĕркеленĕ, саккуна пăснă 29879 тĕслĕхе шута илнĕ. Штрафсен калăпăшĕ - 180 миллион та 808 пин тенкĕ. Саккунсене уяман 111 хуçалăх ĕç-хĕлне чарса лартмах тивнĕ.

Чăваш Енре те хăш-пĕр хуçалăх ĕç-хĕлне чарса лартас ыйтăва судсенче пăхса тухнă. Пĕлтĕр 78 хуçалăха тĕрĕсленĕ май 66 йĕркесĕрлĕх куç тĕлне пулнă. Çитменлĕхсене пĕтерме тăрăшнине кура республикăра уйрăмах хăрушă чирсене аталанма майсем пулмасса шанас килет...

**Надежда ВАСИЛЬЕВА,**
**управлени ĕçченĕ.**

САМАХ ПАРĂР-ХА

# Вăтанман – вĕрÿçĕ, ÿркенмен юмăçă пулнă

**Елена АТАМАНОВА**

**Çамрăк чухне кам юмăç ярса курман-ши? Ача чухне Раштав умĕн çурçĕр иртсен урама тухса хапха урлă кăçатă ывăтаттăмăр, писиххи пăраххаттăмăр. Упăшка мĕн сăнлă пуласси пĕлес тесе витене кĕрсе сурăх ури те тытнă. Шурри – сарă каччăна, хури – хураскерне пĕлтернĕ. Студент чухне общежитире те тус-тантăшпа пĕрле юмăç янă. Пулас мăшăр ятне, хăçан качча каяссине, миçе ача çуратассине пĕлме ĕмĕтленнĕ. Çынна шăпа вăрттăнлăхĕсем ялан илĕртеççĕ çав. Çамрăк чухне тата темĕн те пĕлесшĕн çунни канăç памасть. Уйрăмах йывăр вăхăтра лайăххине шанас килет.**

**Ахаль чухне çакă ача вăййи пек кăна туйăнать. Хуйхă пуссан нумайăшĕ юмăçран пулăшу ыйтма васкать. Йывăр чирлĕ çын больницăран тухсан ытларах чухне чиркĕве те мар, юмăç патне утать. Çыннăн мĕне е кама та пулин ĕненсе чунне йăпатмалла-çке. Пирĕнтен чылайăшĕ хăйĕн ĕмĕрĕнче пĕрре те пулсан юмăç патĕнче пулнах. Турă мĕн çырнине пĕлес, ăнланмалла мар пулăмсене уçса парас килет-çке.**

**Икĕ çул каялла хуларан килне таврăнма тухнă хамăр ял хĕрĕ кăнтăр кунĕнчех çухалнăччĕ. Çу тăршшĕпе ăçта кăна шырамарĕç-ши ăна? Юмăçсем патне те çÿрерĕç. Вĕсенчен пĕри хуларан аякра мар вырнаçнă аслă çул хĕрринчи вăрманта шырама хушнă. «Тупаймасан хам пыратăп, хĕр виллин тĕлне кăтартатăп. Сăнÿкерчĕк çак вăрмантан аяккала ямасть мана», – тенĕ. Туратран çакса хăварнăскерне чăн та çав вырăнтах тупрĕç. «Юмăç каламан пулсан унта кайса пăхăттăмăр-и?» – йĕчĕç шыраса ывăннă, хуйхăпа хуçăлнă çывăх çыннисем.**

**Иртнĕ ĕмĕрĕн 90-мĕш çулĕсенче юмăç тавраш пушшех те нумайланчĕ. Хаçата уçнă-уçман «упăшкăра таварăтăп, çаваратăп, ют хĕрарăмран сиретĕп, савни тупма пулăшатăп» тесе çырни тата ытти пĕлтерÿ тăтăшах куç тĕлне пулать. «Юмăç Пÿлĕх панине те пÿлме пĕлет», – тесе ахальтен каламан пуль çав ĕлĕк. Юлашки çулсенче суя юмăçсем çумăр хыççăнхи кăмпа пекех йышланчĕç. Ялсенче те, хуласенче те хунаса пыраççĕ вĕсем. Хăйсен пулăшăвĕсене хаçат урлă кăна мар, Интернетра та сĕнеççĕ. Наталья, Мария, Дарина, Анастасия... Тата мĕн ятли кăна çук-ши? Нивушлĕ çын шăпине пурте витĕр курма пуçларĕç? Вĕсен хушшинче çамрăк та нумай. Ку тупăш илмелли, пуймалли меслет пек те туйăнать. Çынсене улталаса услам тăвасшăн çунаççĕ, юмăç янăшăн укçине самаях илеççĕ. «Юмăç алли ют çын укçине юратать», – тенине пĕрре мар илтнĕ асанне-кукамайран.**

**Финанс кризисĕ пушшех те çĕнĕ йывăрлăхсем çуратать. Ĕçсĕр тăрса юлакансен йышĕ ÿсни савăнтаракан хыпар мар. Хăшĕ-пĕрин парăма татмалла, кредит тÿлемелле, теприн пĕлĕвне малалла тăсассишĕн пысăк укçа кăларса хумалла. Пур ĕçе сухатсан çĕннине тупасси те ансатах мар. Çав вăхăтра юмăçсем патĕнче пулăшу шыракан пайтах. Мелĕ самантпа усă курса ĕçе вырнаçассине, çăмăллăнах пысăк укçа тупассине ĕнентерееççĕ суеçĕсем. Статистика кăтартăвĕсемпе килĕшÿллĕн, пĕр уйăхра кăна 20 пин ытла çын юмăç патне çул тытать, çурри ытла вара ултав тыткăнне çакланать. Суеçĕсем этем психологине лайăх чухлаççĕ, пулăшу ыйтма килни вара хăех чун ыратнине пĕлтерсе пырать.**

**Чикансен вăлтине ытларах чухне сусăрсем, çемçе чунлисем, вăй-халсăррисем, йывăр хуйха путнисем, инкеке лекнисем, хÿтлĕхсĕррисем лекеççĕ.**

**Ыран мĕн пуласси вăхăт хăех кăтартать. Шăпа çырнинчен вара пурпĕр тараймăн. Суя юмăçсен серепине çакланса тĕрĕс çулран пăрăнас марччĕ. «Юмăçа укçа париччен юман кутне пырса тăк», – тесе ахальтен каламан пуль ваттисем.**

АКА, 5 – ГЕОЛОГ КУНĔ

# Çĕр çурхахне пула... усал шыçă аталанать

### Йывăр ĕçĕн хисепĕ пысăк

Кайран унăн конспекчĕсем ыттисене экзамен тытма пулăшни, институтри арçынсен хорĕнче юрлама пуçлани, геофизика практикисене хутшăнни, вĕренсе пĕтерсен экспедици пуçлăхне суйлани... çинчен ытла та интереслĕ каласа кăтартать вăл. Йывăрлăхсене çĕнтерсе пыма хăнăхни çĕнĕ ӳсĕмсем тума пулăшнă та ăна.

Анатолий Иванович Кăркăс Республикинчи геологи управленийĕнче 12 çул ĕçленĕ, Кăркăс ССР Наукăсен Академийĕн аспиратуринчен вĕренсе тухнă, Мускаври С.Орджоникидзе ячĕллĕ геологи разведкин институтĕнче «Çĕр айĕнчи тăварсăр шыва уран изотропĕсемпе усă курса шырамалли меслет» темăпа диссертаци хӳтĕленĕ.

Геологипе минералоги наукисен кандидачĕ Кăркăс Наукăсен Академийĕн физикăпа математика институтĕнче нумай çул ĕçленине палăртса хăварас килет. Ăна техника наукисен докторĕсем П.Чалов, В.Ферронский, геологипе минералоги наукисен кандидачĕ И.Осмоловский нумай пулăшнă. Элĕк районĕнчи Тавăтра çуралнăскер Ырлав орденне тата «Раççей наукин авторитетне çирĕплетнĕшĕн» медале тивĕçнĕ. Унсăр пуçне вун-вун Хисеп хучĕпе чысланă ăна.

1994 çултанпа Анатолий Тихонов тăван республикăра пурăнать. Шупашкарта геологи тата геоэкологи ыйтăвĕсемпе ĕçлекен ăслăлăхпа тĕпчев институчĕ уçнă вăл.

### Чир ăçта алхасать?

Çын пурнăçĕ таврапăхпа тачă çыхăннă. Пирĕнтен кашниех – çутçанталăкăн пĕр пайĕ. Этемшĕн сывлăх малти вырăнта. Хăйне лайăх туякан, паллах, ытлă-çитлĕ пурăна ĕмĕтленет. Хăш чухне вара чир-чĕр шухăш-тĕллеве пĕр самантра сирсе яма пултарать.

Пĕтĕмĕшле статистика тăрăх, Шупашкарти çурçĕр-хĕвеланăç районĕнче тĕпленнисен хушшинче усал шыçăпа нушаланакан нумайрах. Чуна çӳçентерекен лару-тăрăва улăштарма пулать-и? Анатолий Иванович шăпах çак ыйтăва уçăмлатма пулăшрĕ.

Сывлăхшăн сиенлĕ вырăна геопатоген зони теççĕ. Вăл 35-40 километр тарăнăшĕнче çĕр çуралнипе çыхăннă. Çак хушăкран тарăнăшри шывпа пĕрле газсем, наркăмăшлă металсем, радиоактивлă элементсем, сульфатсем, хлоридсем, фторидсем çиеле тухаççĕ. Çавна май çĕр çинчи магнит, электричество, гравитаци уйĕсем /поле/ улшăнаççĕ. Вăл чĕрĕ чунсен сывлăхне усал витĕм кӳрет.

Геологи тата геоэкологи ыйтăвĕсемпе ĕçлекен ăслăлăхпа тĕпчев институчĕ Шупашкарта тарăнăшри шывсем тухакан аномали 3 лаптăкне палăртнă. Пĕри шăпах çурçĕр-хĕвеланăç районĕнче вырнаçнă. Тепри Трусиха юханшыв хĕррипе иртсе Лакрей вăрманĕ, электроаппарат завочĕ патĕнчен иртсе Ассакасси ялĕ еннелле тăсăлать. Виççĕмĕшĕ – хулан хĕвелтухăç районĕнче.

Вырăс платформин космотектоника карти те тарăнăшри çĕр çуралнине алă тупанĕ çинчи пекех кăтартать. 25-30 километр сарлакăш çак зона Мускав, Шупашкар урлă иртсе Урал тăвĕсем патнелле туртăнать. Чăваш Республикинче Шупашкар шыв управĕ çумĕнче çĕр çуралăни яр уççăн курăнать. Геоэкологи тĕпчевĕсем те çурçĕр-хĕвеланăç районĕнчи тăпра йывăр металсемпе вараланнине çирĕплетеççĕ.

Халăх çак вырăнта тĕпленнĕренпе вăхăт нумай иртмен, мĕншĕн тесен хулан çурçĕр-хĕвеланăç пайĕ тинтерех çĕкленнĕ. Апла пулсан çакăнта пурăнакансем урăх çĕртен куçса килнĕ. Вĕсем магнит, гравитаци, физика урăх уйĕсен ылмашăвне малтан туйман. Çĕнĕ çĕрти çав витĕме ачасем уйрăмах сисĕмлĕ.

Çав вăхăтрах кăнтăр-хĕвеланăç тăрăхĕнчи, Шупашкар тата Сăкăт юханшывсен хушшинчи, çĕр чылай тасарах. Сăлтавĕ ансат: çакăнти çĕр айĕнче шыв юхăмĕ пур. Унта тарăнăшра çĕр çуралман, йывăр металсем пуçтарăнман.

Анатолий Иванович çирĕплетнĕ тăрăх, аномали вырăнĕсенче çурт хăпартни те инкек патне илсе çитерме пултарать. Урăхла каласан – унта çĕр чĕтренес хăрушлăх пур.

– Геопатоген вырăнĕ хими заводĕнчен 10 хут сиенлĕрех. Вăл нерв тытăмне майĕпен хавшатса пырать, кайран рак пуçланать, – çирĕплетет Анатолий Тихонов.

ХХ ĕмĕр пуçламăшĕнчех сиенлĕ вырăн усал шыçă пуçарнине тĕпчес ĕçе республикăри онкологсене те явăçтарнă вăл. Тĕрлĕ тытăмри специалистсем пĕрешкел пĕтĕмлетӳ патне пырса тухнă: вăл е ку тăрăхра ракпа чирлекен нумайланни экологи пăсăлнине кăтартать.

Çакнашкал лару-тăрура çыннăн мĕн тумалла? Анатолий Иванович ăнлантарнă тăрăх, магнит уйĕн ылмашăвне шута илсе ятарлă препаратсемпе усă курмалла. Сиплев курсне тухтăрсем кăна палăртма пултараççĕ. Профилактика мелĕ сывлăх хавшасран сыхлĕ. Хăй вăхăтĕнче Анатолий Тихонов геофизикпа Юрий Павлов онколог çак ыйтăва татса памашкăн чиновниксемпе çыхăннă. Анчах хушма тĕпчевсем ирттерме хыснаран укçа уйăрман.

Чăваш Республикинче геологи тĕпчевĕсем ирттерме май туса паманни уйрăмах пăшăрхантарать Анатолий Ивановича. Çавăнпах урăх регионсен саккасĕсене йышăнма тивнĕ унăн.

«Эпĕ килти лару-тăрăва пула саккăрта, 1948 çулта, тин шкула кайнă. Ялхуçалăх техники пулманран, çынсем çитменрен колхозри пĕтĕм ĕçе алă вĕççĕн тунă. Анне ыттисемпе пĕрлех ĕç кунĕшĕн тăрăшнă. Çав вăхăтра аппапа пичче шкула çӳретчĕç. Мана çулталăкри Валя йăмăкăма пăхма хушса хăваратчĕç.

...Элĕкре паспорт илсен /ун чухне ял çыннин алăра пулман вăл/ Свердловскри сăрт-ту институтне вĕренме кĕмешкĕн тухса кайрăм. Ялти халăхăн укçа çителĕклĕ пулман. Инçе çула тухма мана 30 тенкĕ панăччĕ. Вăрнар – Свердловск чукун çул билечĕн хакĕ 9 тенкĕччĕ...

...Экзаменсен вăхăтĕнче пире студентсен общежитине вырнаçтарчĕç. Эпĕ кирлĕ чухлĕ балл пуçтарса вĕренме кĕтĕм. Авăн уйăхĕн 1-мĕшĕччен 10 кунлăха 1 тенкĕ юлнăччĕ. Ун чухне столовăйри сĕтел çинчен çăкăр татăлман. Эпĕ 7 пуслăх лапша, 2-шер пуслăх 2 стакан чей илсе тӳлевсĕр çăкăрпа çиеттĕм. Анчах капла та çитермелли çук. Вара вĕренӳ çулĕ пуçланиччен чукун çул вокзалне кайса ĕç ыйтрăм. Мана сивĕтмĕше какай йăтма вырнаçтарчĕç. Çапла авăн уйăхĕччен пурăнтăм...»

– «Осколок Советского Союза. О геологических и научных проблемах Чувашии» кĕнекере чунне уçать сăрт-ту инженер-геофизикĕ, наука тата техника енĕпе Кăркăсстан Патшалăх премийĕн лауреачĕ, 240 ăслăлăх ĕçĕ тата публикацисен авторĕ Анатолий Тихонов.



- **ĂСЧАХСЕМ ÇИРĔПЛЕТНĔ ТĂРĂХ, ШУПАШКАРТИ ÇУРÇĔР-ХĔВЕЛАНĂÇ РАЙОНĔ – ГЕОПАТОГЕН ТĂРĂХĔ. УНТА ПУРĂНАКАНСЕН ХУШШИНЧЕ УСАЛ ШЫÇĂПА АПТРАКАН ЫТЛАРАХ.**
- **ГЕОПАТОГЕН ТĂРĂХĔ ХИМИ ЗАВОДĔНЧЕН 10 ХУТ СИЕНЛĔРЕХ.**
- **ЧĂВАШ ХАЛĂХĔ АЛМАЗ ÇИНЧЕ УТСА ÇӲРЕТ.**
- **ШУПАШКАРСЕН ÇĔР АЙĔНЧЕН ТАСАЛСА ТУХАКАН ШЫВА ĔÇМЕ МАЙ ПУР.**

### Алмаз тупса пуяр-и?

Чăваш халăхĕ алмаз çинче утса çӳренине тĕшмĕртмест те пулĕ. Çĕр айĕнчи çак пуянлăха тытса курмасăр ĕненес те килмест. Тĕпĕ-йĕрĕпе каласа кăтартас тăк – иртнĕ ĕмĕрĕн 80-мĕш çулĕсенче СССР ăсчахĕсем пирĕн тăрăхра алмаз шыранă. Ĕçе пуçăнни харама кайман. Патăрьел районĕнчи Хырла юханшыв тĕпĕнче алмаз кристалĕсене тупнă вĕсем. Анчах кайран, çĕнйĕркелӳ тапхăрĕ пуçлансан, ĕçе малалла тăсма укçа пăхса хăварман.

Кунта та аномали паллисем пур: авалхи çĕр сийĕ çиелерех тухнă. Çакă та – тарăнăшри çуркаланчăк витĕмĕ. Çĕр пусăрăннине пула алмаз кристалĕсем «кимберлит кĕпçи» витĕр сирпĕнсе тухаççĕ.

СССР ăсчахĕсен пĕтĕмлетĕвĕсемпе Анатолий Иванович Мускавра паллашнă. Кайран вырăнти институтăн специалисчĕсемпе пĕрле тĕпчевсем те ирттернĕ. Пĕтĕмĕшле кăтарту çакăнта алмаз пуррине тепĕр хут çирĕплетнĕ. Анатолий Тихонов çав пуянлăха унта кăна мар, Патăрьел тăрăхĕнчи Çĕнĕ Чĕпкас патĕнче, Елчĕк районĕсенчи Шăмалак çывăхĕнче те шыраса пăхма сĕнет.

Ĕç пуçлама ятарлă оборудовани кирлĕ. Анчах ăна туянмашкăн патшалăх та, пуян уйрăм çынсем те укçа хывасшăн мар. Тĕлĕнмелле...

### Таса шыв та – ура айĕнчех

Шупашкарсен артезиан çăлкуçĕпе усă курма май пур çĕртех Атăл шывне ĕçме тивнишĕн те пăшăрханать Анатолий Иванович. Тарăнăшри çĕр çуралнине пула наркăмăшлантаракан элементсем – хром, бром, бор, натри, тăхлан, марганец... – çиеле тухнине пасăрах асăнтăм. Шупашкар шыв управĕ шăпах аномали зонинче вырнаçнă.

Наукăпа тĕпчев институчĕ районсенчи шыв пахалăхне те тĕрĕсленĕ. Вăрнар тăрăхĕнче, тĕслĕхрен, шыври бор виçерен 8 хут пысăкрах. Патăрьел, Елчĕк, Муркаш районĕсенче те çавăн евĕрлĕрех ӳкерчĕк.

Хакла ларакан шыв управĕсен витĕмсĕрлĕхĕ тавра та сăмах пуçарчĕ Анатолий Тихонов. Вĕсен тĕпне ятарлă пленка сарасси йăлара. Анчах ăна хупламалла мар. Çакăнти шыва тасатакан сооруженин витĕр сăрхăнтарса кăлараççĕ. Çавна май çĕр айĕнчи ĕçме юрăхлă шыв саппасĕ пĕтсе, вараланса пырать. Ăна вара кайран каялла тавăраймăн.

«Таса шыв» программа хатĕрленĕ чухне наукăпа тĕпчев институчĕн сĕнĕвĕсене шута илменшĕн кăмăлсăр Анатолий Иванович. Чăваш Республикинчи çĕр айĕнчи шыв саппасне тĕрĕслеме пуçланă, анчах ĕçе вĕçне çитерме каллех укçа çитменни чăрмантарать-мĕн.

Чăваш геологĕсем Çĕр планета пулса кайни çинчен çĕнĕ гипотеза сĕннĕ. Çакăншăн Пĕтĕм тĕнчери çĕнĕрен уçакансен тата шухăшласа кăларакансен академийĕн свидетельствине тивĕçнĕ. Кун пирки халĕ Анатолий Тихонов уйрăм кĕнеке çырать. Вулаканăмăра унпа та паллаштарăпăр-ха.

**Марина ТУМАЛАНОВА.**

Çемье архивĕнчи сăнӳкерчĕк.



# «Мега Хенд» пурнăçĕнчи хаваслă историсем

**Кулăшла самантсем кашни çын, çемье, коллектив пурнăçĕнче пулаççĕ. Кăçал Шупашкарти «Мега Хенд» лавкка 3 çул тултарать. Унăн уйрăмлăхĕ – таварсене 10-ран пуçласа 90% таран йӳнетни. Кулăшла тĕслĕхсенчен ытларахăшĕ шăпах çакăнпа çыхăннă. Хăш-пĕр историпе хамăрăн вулакансене паллаштарар-ха.**

### Тележкăна вăрларĕç!

Татьяна «Мега Хенд» лавкkана тавара 90% йӳнетнĕ кун кĕчĕ. Халăх! Тавара тележкăсене тиеççĕ кăна. Татьяна та ретсен хушшипе кайрĕ. Юнашарах – çамрăк хĕрарăм 6-7 çулсенчи ачипе. Амăшĕ пикенсех тавар суйлать, ывăлне вара çакă йăлăхтарнă пулас: тележкăна тĕртсе çӳресе йăпанать.

Юрĕ, Татьянăн вĕсем çине пăхса тăма вăхăт çук – малалла кайрĕ. Анчах кăштахран унăн тележкинчен сасартăк телефон шăнкăравĕ илтĕнсе кайрĕ. «Ăçтан вăл? Хамăн телефон – кĕсьерех! – аса илсе кулать хĕрарăм. – Тележкăри япаласене сиртĕм те – унтан такамăн сумки курăнса кайрĕ. Сотовăй çавăнтан сас парать. Эпĕ лавкkана кĕрсен ăшă пулнипе хывса тележкăна хунă кĕрĕкĕм вара, шашка тирĕнчен çĕленĕскер, çухалнă!»

Вăл пĕр тăхтамасăр телефона тытнă. Линин тепĕр вĕçĕнчи хĕрарăм сасси касса патне пыма тархаслать. «Унта чупрăм. Акă вăл – манăн кĕрĕк!» Хайхи хĕрарăм та, паçăрхи, ачаллăскер, савăнса кайнă. Унăн сумкинче пысăк укçа пулнăмĕн – уншăн пăшăрханнă.

Мĕн пулнă-ха? Арçын ача тележкăна арпаштарса янă иккен – амăшĕнне мар, Татьянăнне тĕртсе кайнă. Япала суйлакан хĕрарăмсем тележкăсем улшăннине сисмесĕрех юлнă.

### Золушка пушмакĕ

Çĕнĕ тавар кӳнĕ кун Оля чаплă пушмака куç хыврĕ. Анчах халех туянас мар терĕ. Пуçламăш хак вĕт – хальлĕхе хаклăрах. Йӳнелессе кĕтес терĕ.

Кану кунĕсенче килчĕ те – пушмак çук! Кăмăлĕ пăсăлчĕ пулин те пушă алăпа тухса каяс килмерĕ – лавккара ăна-кăна суйларĕ. Тумтире тăхăнса пăхмалли пӳлĕме иртрĕ. Суйласа илнĕ курткăна тăхăнма тăчĕ те, ак тамаша, унăн çаннисенчен унччен килĕштернĕ пушмак мăшăрĕпех тухрĕ те ӳкрĕ. Мĕнешкел савăнăç!

Тепĕр эрнерен Оля çак пушмакпа хĕр тусĕн туйĕнче çĕрĕпе ташларĕ. Çав каç туйра питĕ кăмăллă йĕкĕтпе паллашрĕ. Халĕ вĕсем питĕ туслă. Ĕç-пуç туй патнелле пырать пулас...

Сăмах май, клиентсем «Мега Хендра» тавара çапла пытарни час-часах пулать. Йӳнĕрех туянас килет вĕт, çавăнпа каяраха хăвараççĕ, килĕштернĕ япалана урăх çын туянасран шикленсе ытти тавар ăшне пытарса хураççĕ.

### Ахалех тăрантартăм...

«Мега Хенд» лавкка уçăлсанах пĕр клиентка кунти сутуçăпа çывăхланма тăрăшни сисĕннĕ: е шăккалат килсе парать, е тата мĕнле те пулин кучченеç... Пĕррехинче вара пулăшма ыйтать:

– Çак курткăна хыçалти пĕр-пĕр пӳлĕмре пытарса хураймăр-и? Темиçе кунран йӳнелĕ те – килсе туянăп.

– Çук, пирĕн апла тума юрамасть, – килĕшмест лешĕ.

– Апла-тăк, тархасшăн, каçчен те пулин сыхлăр-ха – ыран ирхине туянăп.

– Ку япала чăнласах сирĕн-тĕк – сире кĕтсе илетех, – лăплантарнă ăна лавкка ĕçченĕ. Çапла калаçса сывпуллашнă.

Ĕç кунĕ вĕçленеспе вара çак куртка тепĕр хĕрарăма килĕшнĕ – туянма чараймастăн вĕт. Çĕнĕ курткăллă пулса тăнăскере ăсатнă май ăнман «хуралçă» ĕçтешĕсемпе хăйне ӳпкелесе калаçать: «Акă ыран «хĕр тусăм» килĕ те – мана сăмах тивĕ: «Мĕншĕн, Жучка, сана тăрантартăм?!»

### Хĕрарăм вăрттăнлăхĕ

«Мега Хенд» клиенткисем калаçаççĕ:

– Упăшка ятлаçать: «Пĕр шкапа хăвăн япалусемпе тултартăн, иккĕмĕшне туянтăмăр – ăна та тултаратăн», – тет. Санăн вăрçăнмасть-и?

– Эпĕ ăна çĕнĕ япала туянни çинчен каламастăп. «Мега Хендран» таврăннă чух мăшăрăм килте тĕк хваттере тӳрех кĕместĕп, япаласене кладовкăра хăваратăп. Вĕсене упăшка çук чух илсе кĕретĕп: çăватăп, якатса шкапа çакатăп – вăл сисмест те.

### Хоккей айккинче тăтăр!

Инçех мар пурăнать те – çулланнă çак арçын Шупашкарăн çурçĕр-хĕвеланăç районĕнчи «Мега Хенд» лавкkана час-часах кĕрет. Сехечĕ-сехечĕпе таварсене пăхма пултарать. Арăмĕ малтан ăна çухататчĕ-ха, каярахпа хăнăхрĕ: упăшкине телефонпа тытма çук тăк /суту-илӳ залĕ цокольте вырнаçнă – телефон тытмасть/, эппин, вăл хăйĕн юратнă лавккинче.

Пĕррехинче хĕрарăм упăшкине шыраса черетлĕ хут кунта килнĕ. Мăшăрне килне чĕнет. Лешĕ каясшăн мар, «тата кăштах пулам-ха» тет. Арăмĕ вара ăна мĕнпе илĕртмеллине тавçăрса илчĕ пулас:

– Ну, атя хăвăртрах, телевизорпа кĕçех санăн юратнă хоккей турнирĕ пуçланать!

– Мĕнле хоккей?! – тарăхса каять арçын. – Кунта çĕнĕ тавар кӳнĕ, ăнланатăн-и?!

### Манăн курткăпа!

Антонина «Мега Хенда» çĕнĕ тавар кӳнĕ кун килчĕ те питĕ илемлĕ курткăна куç хыврĕ. Тĕсĕ мĕнешкел, фасонĕ – хулара кун пекки урăх никамăн та çук! Анчах паянах туянас темерĕ: «Кăшт йӳнелессе кĕтетĕп те – пурпĕр манăн пулĕ!»

Тепĕр кунне ирех ĕçе васкать. Подъездран тухрĕ те – самантлăха хытса тăчĕ: тротуарпа илĕртӳллĕ хĕр ярăнса утса иртет. Унăн курткипе! Антонина пике хыççăн пĕр самант чĕнмесĕр утрĕ-ха. Унтан тӳсеймерĕ:

– Ку курткăна ĕнер туянтăр-и?

– Çапла... – самантлăха çухалса кайрĕ хĕр.

– «Мега Хенд» лавккара-и?

– Çавăнта! – йăл! кулса мăнаçлăн хуравларĕ пике.

Пулать вĕт: пĕр-пĕр япала пирки ĕмĕтленетĕн, çав тумтир санăн гардеробунта кирлех тесе кăштахран ăна туянма килетĕн – вăл вара çук та! Эх, «Мега Хендри» йӳнетӳ тытăмĕ! Мана кăна мар, лавккан ытти клиентне те вăл е ку тавара туянма хавхалантарать иккен.




ТЕ ĔНЕНМЕЛЛЕ

# Упăтене калаçма вĕрентеççĕ

**Сухан ӳстерессипе республикăра ытларах Патăрьел районĕ палăрать. Ку ĕç çăмăл маррине кашниех аван чухлатпăр. Çумлама, кăларма, тасатма вăй та, вăхăт та нумай илет вăл. Ĕçĕ, чăн та, тупăш кӳрет. Шел, ĕçĕн пур тапхăрне те механизацилеме çук. Мĕн тумалла апла тăк?**

**Патăрьел тăрăхĕнчи пĕр хуçалăх ертӳçи нумай шухăшласа тăман: алă вĕççĕн пурнăçламалли ĕç валли... упăтесем илсе килнĕ. Африкăра тытнăскерсене Чăваш Ене çитериччен пирĕн климата хăнăхтарма ятарлă лабораторире усранă. Вăл ăçта вырнаçни вăрттăнлăх. Çавăнпах ăшă çĕршыври чĕрчунсене сивве хăш хулара вĕрентнине никам та пĕлмест.**



Илсе килнĕ икĕ упăте аçапа ама иккен. Нумаях пулмасть аçи амине ытти чухнехинчен ытларах ачашлама, тимлĕх уйăрма тăрăшнине шута илсе пĕтĕ мар-ши теççĕ. Анчах çакна хальлĕхе никам та çирĕп калаймасть. Ара, ятарлă специалист килсе çитеймен-ха. Ĕне пăрулаттарса сысна çăвăрлаттарнинчен ытла пĕлмен-туман выльăх тухтăрĕсем те нимĕн те калаймаççĕ. Ара, ял çыннишĕн упăте çапах та пĕлмен чĕрчунçке.

Шанчăклă çăлкуç систернĕ тăрăх, хайхи упăтесем сайра тĕл пулакансем иккен. Çĕр питĕнчен тахçанах çухалнă тесе шухăшлакан примат мар-ши тесе иккĕленеççĕ вĕсем пирки. Дарвин теорийĕпе килĕшӳллĕн çын упăтерен пулнă вĕт. Томиноид тенĕ вĕсене. Анчах çав тĕс пин-пин çул иртнĕ май çухалнă. Упăтесен пĕр тĕсĕ – çын, тепри чĕрчунах пулса юлнă-çке. Теори çапла çирĕплетет. Климат, кĕлетки улшăннине пула паянхи упăтерен çын пулаймасть.

Патăрьелне илсе килнисем вара ĕçлесен-ĕçлесен, вĕрентсен-вĕрентсен шăпах çынна çаврăнма пултараççĕ. Чăн та, çакна хальлĕхе никам та çирĕплетеймест, анчах çĕршыв шайĕнче эксперимент пырать. Çак тĕллевпех вĕсене тĕрлĕ ĕçе хăнăхтараççĕ. Шăпах çакăнпа усă курса тавçăруллă Патăрьел бизнесменĕ хăй тĕллевĕпе усă курма шут тытнă та.

Халĕ упăтесене сухан кăларса-тасатма вĕрентеççĕ. Ĕçĕн çак тапхăрне шăпах автоматизацилемен-çке, пĕтĕмпех çын алли пурнăçлать. Шалу тӳлесе тăкакланасран сыхланса пуçаруллă ертӳçĕ ку ĕçе пĕтĕмпех упăтесене хăнăхтарасшăн. Палăртнине пурнăçлама пуçланă ĕнтĕ.

Упăтесене усрама тăкаклă пулĕ тесе шухăшлакансене çакна каламалла: вĕсене пахчаçимĕçпе тивĕçтерме нухрат çĕршыв шайĕнченех уйăраççĕ. Пушшех те – юлашки вăхăтра чĕрчунсем кăнтăр çимĕçне мар, чăваш çĕрулмине кăмăллама тытăннă иккен. Кун пек вĕсене усрама пушшех çăмăл.

Упăтесем çын калаçăвне ăнланнине, хушнине те аван пурнăçланине палăртаççĕ вĕсене хăйсен куçĕпе курнисем. Анчах хальлĕхе вĕсемпе вырăсла калаçаççĕ-ха. Маттур Патăрьелсем аптрамаççĕ-ха, чĕрчунсене чăвашла вĕрентесшĕн. «Пар» тата «укçа» тесе калама хăнăхнă та ĕнтĕ приматсем. Нумаях пулмасть вăрттăн объекта ялти пĕр ӳсĕр кĕнĕ тет. «Эрех» теме вĕрентесшĕн пулнă. Анчах хĕрарăмсем ăна тӳрех асăрханă та кăларса ывăтнă. Çĕнĕрен аталанакан этемлĕхе ку мурпа арăмсем туслаштарасшăн мар пулинех.

Ĕçлеме хăнăхтарнă май чăвашла та лайăх калаçакан çынсем тăвасчĕ упăтесенчен. Вĕсем аталанма тытăнсан чăваш халăхĕ пĕтес хăрушлăх та текех хăратмĕ ун чухне.

Упăтесене хăй курнă çынпа



**Татьяна НИКОЛАЕВА калаçнă.**

**Ача кӗтекен хӗрарӑмсене паян мӗнле пособисем тивӗҫнине пӗлес килет.**

**Мария П.**
Елчӗк районӗ.

## Ачаллӑ ҫемьесене ЧР саккунӗпе килӗшӳллӗн тивӗҫекен социаллӑ тӳлев

| Тӳлев тӗсӗ | Тӳлев виҫи |
|---|---|
| Ача кӗтнишӗн тата ҫуратнишӗн ӗҫсӗр тесе палӑртнӑ тата ытти категорири /професси пӗлӗвӗ паракан организацире, аслӑ шкулта, хушма професси пӗлӗвӗ паракан организацире, наука организацийӗнче вӗренекенсене, 1 тата 2 ушкӑн инваличӗсене, 18 тултарман сусӑр ачине пӑхакан амӑшне/ хӗрарӑмсене уйӑхсерен тивӗҫекен тӳлев | 459 тенкӗ<br>/ача ҫуратичченхи 70 /иккӗ тата ытларах ача ҫуратнишӗн – 84/ кун кӗрет/ |
| Уйӑхсерен тивӗҫекен ача укҫи<br> | Ҫемьери ҫын пуҫне тивӗҫекен вӑтам тупӑш республикӑра палӑртнӑ пурӑнмалли чи пӗчӗк виҫерен 150 процент иртмесен ача пуҫне тивӗҫекен тӳлев ҫапла пулать<br>**Пӗччен амӑшӗсен**<br>*1 ача пулсан:*<br>2 ҫулччен – 1071 тенкӗ;<br>2-рен пуҫласа 18 ҫулччен – 329 тенкӗ<br>*2 ача пулсан:*<br>2 ҫулччен – 1152 тенкӗ;<br>2-рен пуҫласа 18 ҫулччен – 412 тенкӗ<br>*3 ача пулсан:*<br>2 ҫулччен – 1643 тенкӗ;<br>2-рен 7 ҫулччен – 903 тенкӗ;<br>7-рен 18 ҫулччен – 1395 тенкӗ<br>*4 тата ытларах ача пулсан:*<br>2 ҫулччен – 1643 тенкӗ;<br>2-рен 7 ҫулччен – 903 тенкӗ;<br>7-рен 18 ҫулччен – 1395 тенкӗ<br>**Ҫар ҫыннисен тата ҫухалнӑ ашшӗ-амӑшӗн ачисен**<br>*1 ача пулсан:*<br>2 ҫулччен – 987 тенкӗ;<br>2-рен 18 ҫулччен – 247 тенкӗ<br>*2 ача пулсан:*<br>2 ҫулччен – 1052 тенкӗ;<br>2-рен 18 ҫулччен – 309 тенкӗ<br>*3 ача пулсан:*<br>2 ҫулччен – 1170 тенкӗ;<br>2-рен 7 ҫулччен – 427 тенкӗ;<br>7-рен 18 ҫулччен – 528 тенкӗ<br>*4 тата ытларах ача пулсан:*<br>2 ҫулччен – 1528 тенкӗ;<br>2-рен 7 ҫулччен – 789 тенкӗ;<br>7-рен 18 ҫулччен – 1281 тенкӗ<br>**Тулли мар ҫемьери ачасен**<br>*1 ача пулсан:*<br>2 ҫулччен – 905 тенкӗ;<br>2-рен 18 ҫулччен – 164 тенкӗ<br>*2 ача пулсан:*<br>2 ҫулччен – 947 тенкӗ;<br>2-рен 18 ҫулччен – 206 тенкӗ<br>*3 ача пулсан:*<br>2 ҫулччен – 1412 тенкӗ;<br>2-рен 7 ҫулччен – 671 тенкӗ;<br>7-рен 18 ҫулччен – 1167 тенкӗ<br>*4 тата ытларах ача пулсан:*<br>2 ҫулччен – 1412 тенкӗ;<br>2-рен 7 ҫулччен – 671 тенкӗ;<br>7-рен 18 ҫулччен – 1167 тенкӗ<br>**Ахаль ҫемьери ачасен**<br>*1 ача пулсан:*<br>2 ҫулччен – 905 тенкӗ;<br>2-рен 18 ҫулччен – 164 тенкӗ<br>*2 ача пулсан:*<br>2 ҫулччен – 947 тенкӗ;<br>2-рен 18 ҫулччен – 206 тенкӗ<br>*3 ача пулсан:*<br>2 ҫулччен – 1054 тенкӗ;<br>2-рен 7 ҫулччен – 311 тенкӗ;<br>7-рен 18 ҫулччен – 415 тенкӗ<br>*4 тата ытларах ача пулсан:*<br>2 ҫулччен – 1412 тенкӗ;<br>2-рен 7 ҫулччен – 671 тенкӗ;<br>7-рен 18 ҫулччен – 1167 тенкӗ<br>Ҫемьери пӗр ҫын пуҫне тивӗҫекен тупӑш республикӑри пурӑнмалли чи пӗчӗк виҫерен 150 процент иртсен пӗр ача пуҫне тивӗҫекен тӳлев ҫапла пулать<br>**Тулли мар ҫемьери ачасен**<br>*1 е 2 ача пулсан:*<br>2 ҫулччен – 329 тенкӗ;<br>*3 тата ытларах ача пулсан:*<br>2 ҫулччен – 771 тенкӗ;<br>2-рен 7 ҫулччен – 443 тенкӗ;<br>7-рен 18 ҫулччен – 935 тенкӗ |
| Уйӑхсерен тивӗҫекен ача укҫи<br> | **Ахаль ҫемьери ачасен**<br>*1 е 2 ача пулсан:*<br>2 ҫулччен – 329 тенкӗ<br>*3 ача пулсан:*<br>2 ҫулччен – 412 тенкӗ;<br>2-рен 7 ҫулччен – 83 тенкӗ;<br>7-рен 18 ҫулччен – 182 тенкӗ<br>*4 тата ытларах ача пулсан:*<br>2 ҫулччен – 771 тенкӗ;<br>2-рен 7 ҫулччен – 443 тенкӗ;<br>7-рен 18 ҫулччен – 935 тенкӗ<br>**Опекӑна /попечение/, усрава илнӗ ҫемьесенчи ачасен**<br>2 ҫулччен – 6098 тенкӗ<br>2 ҫулчченхи сусӑр ачасен – 6708 тенкӗ<br>2-рен 7 ҫулччен – 6343 тенкӗ<br>2-рен пуҫласа 7 ҫулчченхи сусӑр ачасен – 6977 тенкӗ<br>7-рен 18 ҫулччен – 6966 тенкӗ<br>7-рен 18 ҫулчченхи сусӑр ачасен – 7662 тенкӗ |
| Ача кӗтекен хӗрарӑма туллин апатланма уйӑхсерен тивӗҫекен тӳлев /ҫемьери пӗр ҫын пуҫне тивӗҫекен тупӑш республикӑра палӑртнӑ пурӑнмалли чи пӗчӗк виҫерен иртмесен/, тухтӑр ҫырса панипе | 100 тенкӗ |
| Кӑкӑр ӗмӗртекен хӗрарӑма туллин апатланма уйӑхсерен тивӗҫекен тӳлев /ҫемьери пӗр ҫын пуҫне тивӗҫекен тупӑш республикӑра палӑртнӑ пурӑнмалли чи пӗчӗк виҫерен иртмесен/, тухтӑр ҫырса панипе | 100 тенкӗ |
| 2 ҫултан пуҫласа 3 тултарман ачисемшӗн ашшӗ-амӑшне уйӑхсерен тивӗҫекен тӳлев /ҫемьери пӗр ҫын пуҫне тивӗҫекен тупӑш республикӑра палӑртнӑ пурӑнмалли чи пӗчӗк виҫерен иртмесен/ | 70 тенкӗ |
| 2012 ҫулхи декабрь 31-мӗшӗ хыҫҫӑн ҫуралнӑ е усрава илнӗ виҫҫӗмӗш тата ытларах ачашӑн уйӑхсерен тивӗҫекен тӳлев | ЧР Министрсен кабинечӗ ачасем валли палӑртнӑ пурӑнмалли чи пӗчӗк виҫе пысӑкӑш |
| Тӑлӑх е ашшӗ-амӑшӗн хӳттисӗр юлнӑ, тӗрлӗ учреждениере вӗренекен, усрава е попечение илнӗ ҫемьере пурӑнакан 18 тултарнӑ ачасене уйӑхсерен тивӗҫекен тӳлев | республикӑра ӗҫлекен ҫынсемшӗн палӑртнӑ пурӑнмалли чи пӗчӗк виҫе пысӑкӑш /вӗренсе пӗтериччен, вӗренсе пӗтернӗ ҫулхине те укҫа сентябрӗн 1-мӗшӗчченех тивӗҫет/ |
| Республикӑри амӑшӗн /ҫемье/ капиталӗ. 2012 ҫулхи январӗн 1-мӗшӗнчен пуҫласа ҫуралнӑ /усрава илнӗ/ 3-мӗш е ытларах /малтан ку пулӑшӑва илмен тӗк/ ачашӑн тивӗҫет. Виҫҫӗмӗш е ытларах /малтанах ку пулӑшӑва тивӗҫмен тӗк/ ачин пӗртен-пӗр усравҫи пулсан ку капитала арҫын та тивӗҫет /суд усрава илнине ҫирӗплетекен йышӑнӑва 2012 ҫулхи январь уйӑхӗн 1-мӗшӗ хыҫҫӑн йышӑннӑ пулсан/ | 100 000 тенкӗ |

## Ачаллӑ ҫемьесене РФ саккунӗпе килӗшӳллӗн тивӗҫекен социаллӑ тӳлев

| | |
|---|---|
| Саккунпа пӑхса хунӑ хӑш-пӗр сӑлтавпа ӗҫсӗр юлнӑ е ӗҫсӗр тесе йышӑннӑ хӗрарӑмсене ача ҫуратиччен тата ҫуратнӑшӑн тивӗҫекен тӳлев | 543 тенкӗ те 67 пус /уйӑхсерен/<br>/ача ҫуратиччен 70 /иккӗ е темиҫе ача ҫуратсан – 84/ кун, ҫуратсан – 70 /йывӑррӑн ҫуратсан – 86, икӗ е ытларах ача ҫуратсан – 110/ кун шутлаҫҫӗ |
| Тухтӑр патне малтанхи эрнесенчех /12 эрнеччен/ шута тӑнӑ ача кӗтекен хӗрарӑмсене пӗрре тивӗҫекен тӳлев | 543 тенкӗ те 67 пус |
| Ача ҫуратнӑшӑн пӗр хутчен тивӗҫекен тӳлев | 14497 тенкӗ те 80 пус |
| Амӑшӗн капиталӗ | 453026 тенкӗ те 00 пус |
| Ачана 1,5 ҫул тултариччен пӑхнӑшӑн тивӗҫекен тӳлев | 2718 тенкӗ те 34 пус – пӗрремӗш ачашӑн<br>5436 тенкӗ те 67 пус – иккӗмӗш ачашӑн |
| Ачана 1,5 ҫул тултариччен пӑхнӑшӑн тивӗҫекен тӳлев | юлашки 12 уйӑхри шалӑвӑн вӑтам виҫин 40 проценчӗ<br>Чи пысӑк тӳлев – 10837 тенкӗ те 36 пус |
| Хӗсметре призывпа тӑракан салтакӑн ача кӗтекен арӑмне пӗр хутчен тивӗҫекен тӳлев | 22958 тенкӗ те 78 пус |
| Хӗсметре призывпа тӑракан салтакӑн ачине уйӑхсерен тивӗҫекен тӳлев | 9839 тенкӗ те 48 пус |

ÇЫРУ ÇЫРТĂМ ВАСКАСА

# Пылак туйăм... шăрша чăтаймарĕ

Хамран ниепле те йĕрĕнме пăрахаймастăп. Чунăм ырăн тупаймасть. Çав тери нĕрсĕр те айван туятăп хама. Шăршлă арçынпа юнашар вытрăм-çке! Намăс! Калама çук намăс! Чунăма уçсан кăштах лăпланăп-ши тетĕп. Кун пеккине кама калăн? Çавăнпах хаçата çыру ярас терĕм. Шурă хут теме те чăтать теççĕ...

Çамрăклах паллатăп Мĕтрие. Пĕрремĕш савни тесен те йăнăш мар. Шкулта вĕреннĕ чухне хушăран тĕл пулаттăмăр. Клубран киле ăсаткалатчĕ. Хам ăна пачах юратманнине халĕ ăнланатăп-ха, анчах çамрăк чухне çакна чухламан. Килĕштернĕ паллах. Ара, савмалăх сăн-пичĕ те, кĕлетки те пур Мĕтрин.

Çÿрекелерĕмĕр те уйрăлтăмăр. Чуптуса мар, йĕркеллĕ ыталанса та курман унпа. Алăран çавăтăнса киле юнашар утнипех çырлахнă. Сивĕ каçсенче шăннăран çеç ун çумне тĕршĕнеттĕм.

Çав тери айван мар-ха вăл, тутана сĕртĕнес шухăшĕ, тен, пулнă та. Сăпайлăччĕ вăл, ясар марччĕ.

Шкул хыççăн вĕренме хулана килсен пирĕн çулсем уйрăлчĕç. Кăштахран Мĕтри авланнине илтрĕм. Амăшĕн аллинчен вĕçерĕнсен хĕрсене юратас тĕлĕшпе харсăрланнă пулинех: пулас арăмĕ хĕрĕх чĕрнеленнĕ терĕç. Чăн та, часах çут тĕнчене Наçтук килчĕ.

Пĕррехинче пасарта тĕл пултăмăр унпа. Сывлăх сунтăмăр, калаçкаларăмăр. Уйрăлас умĕн телефон номерне ыйтрĕ хайхи. Хирĕçлемерĕм. Çакăн хыççăн хушăран шăнкăравларĕ вăл. Мĕнле пурăннипе кăсăкланчĕ, май тупăнсан кафене те чĕнчĕ. Арăмĕнчен уйăрас шухăшпа мар, каçсерен тепĕр чухне тунсăх пуснăран килĕшеттĕм. Тем пирки те калаçаттăмăр унпа. Çакăн пек чухне халĕ те чĕри тĕпĕнче мана упранине, авланасси те ăнсăртран пулса тухнине темиçе те систернĕччĕ Мĕтри. Шÿтлесе иртереттĕм ку калаçусене.

Тепĕр чухне вара иртнишĕн ÿкĕнеттĕм те. Ара, хутшăнусене упрама пултарнă тăк манăн упăшка та пулаятчĕ-çке вăл. Ĕçчен, маттур, ÿркенмест. Тăрăшсах хваттер те туянчĕ. Машини те чупать. Мăшăрне те аван пăхать. Икĕ ачипе килте ларать ав Татюк. Эпĕ вара халĕ те пĕччен...

Çапла пĕр канмалли кун каллех шăнкăравларĕ тусăм. Пĕччен пулнăран тунсăх пуснине пĕлтертĕм, хайхине хăнана чĕнтĕм. Турткаланмарĕ «савни» – килĕшрĕ.

Часах хул хушшине шурă эрех хĕстерсе те çитрĕ. Килнĕ хăнана тараватлăн кĕтсе илтĕм. Сĕтел хатĕрлерĕм. Анчах Мĕтри алăкран кĕрсенех кăмăл хуçăлчĕ. Нускине миçе кун çуманши? Пушмакне хывсанах сăмсана ырă мар шăрши кÿ! кĕчĕ. Чутах чыхăнаттăм. Халĕччен унран кун пек шăршă кĕнине туйманччĕ-ха. Тепĕр тесен, пултарайман та. Урамра тĕл пулнă чух пушмакне хывтарман вĕт. Ĕçрен тухнăскер нуски улăштарайман ĕнтĕ тесе хама лăплантарса хăнана сĕтел хушшине вырнаçтартăм.

Кучченеçе активнĕ хыççăн пуç мимисем аванах шĕвелчĕç курăнать. Вĕри юн та çамрăк кĕлетке тăрăх хăвăртрах чупма тытăнчĕ. Çумарах та çумарах вырнаçрăмăр, часах тутасем те пĕрлешрĕç. Тутасем çеç-и? Кĕлеткесем те çаралчĕç...

Юрату çимĕçне активсен çеç хам мĕн тери шăршлă арçын çумĕнче выртнине ăнлантăм. Уринчен çеç мар, хăйĕнчен те эрне çăвăнман евĕр шăршă перет. Нивушлĕ çакна эпĕ малтанах асăрхайман? Чалт! сиксе тăтăм та намăса çуса ярасла çăвăнма чуптартăм.

Йĕрĕнчĕклĕхе ăшă шыв та, сивви те çуса тасатаймарĕ паллах. Эпĕ мĕн шухăшлине диван çинче ларакан Мĕтри те ăнланчĕ курăнать: «Çав тери тарлатăп. Нускине те ирпе çеç тăхăннăччĕ», – терĕ вăл тÿрре тухса. Анчах унăн сăмахĕсем кăмăла пушшех пусарчĕç...

Кун пек шăршлă арçынпа арăмĕ епле пурăнать-ши? Çумне мĕнле выртать-ши? Аса илсен халĕ те кĕлетке тăрăх сивĕ чупать. Е хĕрарăмĕ тирпейсĕр-ши? Унтанпа Мĕтри тек шăнкăравламарĕ. Эпĕ те унпа текех калаçас çук. Пылак туйăма аван мар шăршă пусарчĕ.

**АЛИНА.**

ИКĔ ШУХĂШ

# Авланасран хăратăп

Ольăпа пĕр тăрăхра çуралса ÿснĕ эпир. Пĕр шкултах вĕреннĕ, анчах ун чухне хутшăнман. Манран пилĕк çул кĕçĕн вăл. Эпĕ алла аттестат илсен Шупашкара килтĕм. Çуралнă Тутарстана сайра çеç çÿрекелерĕм. Çулĕ инçе-çке. Апла пулин те уйăхра пĕрре те пулин çитеттĕмех. Эпĕ виççĕмĕш курсра вĕреннĕ чухне Оля вуннăмĕш класа çитнĕччĕ. Канмалли кунсенче клуба тухатчĕ. Яла килсан кураттăм ăна. Темиçе хутчен ăна килне ăсатсан чунăмра тем хĕмленнине туйрăм. Çавăнпах Чăваш Ене таврăнсан та унпа хушăран калаçрăм, çырусем çÿретрĕмĕр.

Вăхăт шурĕ. Аслă шкул пĕтерсенех салтака кайрăм. Ăсату каçне Оля та пычĕ. Кĕтме шантарчĕ.

Çĕршыв умĕнчи тивĕçе пурнăçласан эпĕ ĕçе Шупашкартах вырнаçас шухăшлине шута илсе Оля та шкул пĕтерсен кунтах килчĕ. Пĕрпĕрне ухмаха тухасла юратнă тесе калаймастăп. Общежитире пурăнакан çамрăк студент, паллах, темиçе хĕрпе те калаçнă. Чылайăшне килĕштереттĕм. Ентеше те манмастăм ĕнтĕ. Ăна та ялта клубран килне ăсатакан пулман мар. Эпĕ салтакра чухне те Шупашкара тин килнĕскер сахал мар каччă чĕрине çунтарнă. Эпĕ те хĕсметрен таврăнсан Ольăпа çеç çÿремен. Мăйран уртăнакансем татах та пурччĕ. Хушăран вĕсемпе те тĕл пулаттăм. Ольăна ытларах кăмăллаттăм ĕнтĕ, халĕ те саватăп ăна, анчах чунран парăнман.

Вăхăт иртнĕ май тусăм ман çума ытларах та ытларах туртăннине те сисрĕмха. Малтанласа вăхăт çук текен сăлтавпа курнăçма, уçăлса çÿреме килĕшместчĕ-тĕк каярах пĕрмай тунсăхланине системе тытăнчĕ.

Нумаях пулмасть вара ман патăма пурăнмах куçрĕ. Çакна, тĕрĕссипе, тавçăрса та юлаймарăм.

Салтакран таврăнсан икĕ çултан аттепе анне пулăшнипе хваттер туянтăм. Кредитсăр мар паллах. Хама ятăн кĕтеслĕ пулсан çеç çавăрас шухăш çуралчĕ. Мăшăр, ачасем çинчен ĕмĕтленеттĕм. Анчах ку тĕллев часах сĕвĕрĕлчĕ. Çити-çитми укçа хваттершĕн тÿлесех пĕтет. Çавăнпах иккĕмĕш ĕçе вырнаçрăм. Пĕччене те аран саплаштаратăп та çемьене капла епле тăрантармалла? Тепĕр тесен, шухă яшлăх те иртмен, кĕлеткемре вĕри юн чупать. Нухратăн пĕр пайĕ каçхи клубсенче юлнине, хĕрсене хăналаса тăкакланнине те каламалла.

Оля хăнана килсе çÿретчĕ. Хваттер хăтлине тăтăшах калатчĕ. Пĕррехинче вара ман патăма куçасса пĕлтерчĕ. Вĕсем виççĕн пĕр хваттере тара илсе пурăнатчĕç. Пĕрин хыççăн тепри тусĕсем качча кайрĕç те Оля пĕччене тăрса юлчĕ. Ытла тăкаклипе манпа канашламасăрах япала пуçтарнă хайхи. Килĕштеретĕп-ха ăна, анчах пĕрле кун кунлама хатĕр марччĕ. Çавăнпах хирĕçлерĕм те.

– Чун савнин хваттер пур çĕртех тара илсе пурăнмалла-и? Пĕлетĕн-и мĕнле тăкаклă, – терĕ вăл.

– Эпĕ те сахал мар тÿлетĕп. Мана та укçа çитмест. Эппин, эсĕ те тÿле, – тавартăм çилле пытармасăр.

Оля ман патăма çапла пырса кĕни чăннипех вĕчĕрхентерчĕ. Пĕччен хама кирлĕ пек пурăнма хăнăхнă-çке эпĕ. Туссене те хăнана чĕнеттĕм, киле таврăнманни те пулнă. Халĕ урăхла йĕркене хăнăхма тивет. Малтанхи вăхăтра япаласем вырăнта выртманни те калама çук хытă тарăхтаратчĕ.

Юттисем патне те чупман мар-çке эпĕ. Халĕ алă-урана çыхса лартнă тейĕн. Ĕçрен тÿрех киле таврăнма тивет. Каярах юлсан та шăнкăравлать. Яла та мансăр каясшăн мар мур илесшĕ. Вăл çук чухне эпĕ килте лармасса чухлать-тĕр.

Авланма пиçсе çитменнине чухлатăп. Çав вăхăтрах аттепе анне хăлхине Ольăпа пĕрле пурăннă хыпар кĕрсен пире пĕрлештересрен хăратăп. Пĕрле пурăннинче те пĕр савăнăç çеç куратăп хальлĕхе – киле таврăннă тĕле апат хатĕр. Куншăнах авланаççĕ-и вара?

**ПЕТĔР.**



# Шурă кĕпе тăхăнмăп

Генăна хам хыççăн нумай чуптартăм. Килĕшетчĕ вăл мана, анчах та каçхине киле ăсаттарма вăтанаттăм. Клубран вăрттăн тухса тарни сахал мар пулнă. Хапха умĕнче те чылай кĕттернĕ. Çавçавах унпа хăçан та пулин пĕрлешессине сиснĕ эпĕ. Хăнăхрăм-ши, киле те юнашар утакан пултăмăр. Тунсăхласан хитре СМС-çырусем шăрçалатчĕ савни. Хĕпĕртенипе утса мар, вĕçсе çÿреттĕм. Кăштахран Гена ман пата кашни кун килме тытăнчĕ, чечексем пирки те манмастчĕ. Ытти каччă пек çÿпĕлти марччĕ вăл, мухтанма та юратмастчĕ. Пĕррехинче хам туйăмсене тытса чараймарăм, чуптума тăрсан тĕксе ямарăм.

Хĕр тусăмсенчен чылайăшĕ савнийĕсемпе çырăнмасăрах пурăнать. Ашшĕ-амăшĕ те пĕлмест мар. Килте вăрçмаççĕ-ши е ывăлхĕрĕ çывăх çыннисен сăмахне хăлхана та чикмест-ши? Паллашнăран паллашманах арлă-арăмлă пурăнма тытăннине сивлеттĕм эпĕ. «Ăçта васкаççĕ-ши, ĕлкĕреймеççĕ-шим?» – тесе пуçа вататтăм. «Пĕрмай кивĕлле шухăшлатăн. Кăмака çинчи асанне пекех эсĕ», – кулатчĕç манран тусăмсем.

Генăпа тĕлпулма тытăнсан манăн пурнăç та улшăнчĕ. Мĕншĕн, хам та пĕлместĕп. Пурнăça урăх виçепе хаклама тытăнтăм-ши? Тен, Генăн витĕмĕ ку? Икĕ-виçĕ уйăх хĕрпе каччăлла çÿренĕ хыççăн вăл пĕрле пурăнма сĕнчĕ. Савни пăрахасран е урăххи патне чупма пуçласран хăрасах килĕшрĕм айванскер, юрататăп-çке ăна. «Çырăнатпăр малтан, вара кашни кунах сан çумăнта пулăп», – тесе калама ăс çитереймерĕм.

Пĕрле пурăнма сĕннĕрен Гена мана чăнласах юратни пирки иккĕленместĕм. Хăй те пĕрмаях çакăн пирки калатчĕ, мана ытти хĕрпе танлаштарма май çукки, вилесе юратни çинчен кашни кунах аса илтеретчĕ.

Улшăнчĕ ман Гена та. Урăх хĕрпе хушăран тĕлпулкаланине те пытармасть халь. Юлташĕсемпе калаçнă чухне те ют майрасене куç хывни хăлхана кĕрет. «Эсĕ хальлĕхе манăн арăм мар. Хама кăкарса лартма та ирĕк памастăп», – çапларах çавăрттарса хума та пĕлет.

Эпĕ ăна кăсăклантарма пăрахнă пек те туйăнать. Тен, хăйне канлĕрен кăна пурăнать манпа. Апат пĕçеретĕп, япалисене çуса паратăп. Туй пирки тахçанах шарламасть савниçĕм, ун пирки сăмах пуçарсан калаçăва урăх енне пăрать. Ашшĕ-амăшĕпе, тăванĕсемпе те паллаштармасть. Çемье çавăрма вăл хатĕр мар-мĕн. Ашшĕ пулма та хирĕç, çамрăк имĕш. Мĕн шухăшламаллине те пĕлместĕп. 26 çулта эпĕ. Качча кайма та вăхăт пек туйăнать. Пĕрле пурăнма мĕншĕн килĕшрĕм-ши? Юрату сÿннине кунран-кун туятăп. Вăл çук пек те туйăнать. Шурă кĕпе тăхăнса курасси пирки ĕмĕтленеттĕм малтан. Халĕ ун çинчен шухăшлас та килмест. Темĕнле чаплă туй тусан та тăхăнмастăп. Эпĕ ăна тивĕçлĕ мар. Гена çав çутă ĕмĕте таптарĕ. Каччăсем хĕрпе ырă кураççĕ те кайран пăрахаççĕ. Хамăр айванлăха пула çакă. Мĕншĕн култаратпăр-ши? Кăмака çинчи асанне пек пулма кам чарнă мана? Савнирен куллен-кун сивĕнсе пыратăп. Пĕтĕмпех пăрахса каяс патнех çитрĕм. Тен, тĕрĕсех шухăшлатăп. Генăсăр пуçне урăххине тупаймастăп-и? Хальхинче вара йăнăш утăм тăвасран асăрханăп.

**СВЕТЛАНА.**

Çĕрпÿ районĕ.

*Иван ТЕНЮШЕВ*

# Сарă конверт

Шкулта çиччĕмĕш класра вĕреннĕ чухне Мирун çине тăпăл-тăпăл шăм-шаклă Марье Хадарова ăшшăн-ăшшăн пăхма пуçларĕ. Тăхтавсем вăхăтĕнче Мирун арçын ачасемпе пĕрле коридор тăрăх е шкул картишĕнче ĕрĕхтерсе çӳретчĕ. Вăл ушкăнран уйрăлсанах ун патне хăвăрт-хăвăрт Марье пырса тăратчĕ, хĕпĕртӳллĕн йăл кулса чĕвĕлчĕвĕл сассипе пуплеме пуçлатчĕ. Мĕн çинчен? Тем çинчен те. Сăмахран, ылтăн кĕркуннен капăрлăхĕ çинчен. Вĕренсе тухсан, ӳссе çитсен ăçта ĕçлесси çинчен. Çук, юрату пирки пĕр сăмах та шарламастчĕç. Пытармасăр каласан, Мирун чунĕ те хĕрача еннелле туртăнакан пулса кайрĕ. Тăхтав вăхăтĕнче юлташĕсемпе çил пек вĕçтерсе çӳреме пăрахрĕ. Тĕлĕнмелли çук: Марьепе пуплесе тăма кăмăллăрах-çке-ха. Мĕне тăрать ачасем асăрхаман тĕлте алла-аллăн тытăнасси! Çав тери лайăх пĕрле! Тем тери ырă пĕр-пĕрин ăшшине туйма!

− Çумăрсем хыççăн яхтăлăхра кăрăç нумай тухнă. Ан иккĕлен: асанне каларĕ. Пире кăмпана илсе каймăн-и? − сĕнчĕ Мируна хĕрача уроксем хыççăн.

Мĕн пытарса тăмалли: Мирун хапăл туса килĕшрĕ. Марье тантăшĕпе Çерукпа пĕрле пычĕ. Вăрманта çӳрени усăсăр пулмарĕ: виççĕшĕ те кăмпа чылаях татрĕç. Улах вырăнта Марье арçын ачана хăй яханне те ямарĕ, йыт пулли пек вăрт та вăрт пăрăнчĕ. Çакăншăн хĕрачана Мирун ӳпкелесшĕнччĕ. Ку шухăша часах урăххи çĕнтерчĕ: хĕрача тĕрĕсех тăвать ахăр. Темрен тем сиксе тухма пултарать вĕт.

Кăмпа темерĕн: пĕри лайăххи тепĕрне шырама хистет. Сисмен хушăрах вăрмана тĕттĕм каркăç хупăрлама пуçларĕ. Кĕр каçĕ пĕлĕте сутă çăлтăрсем çакрĕ. Мал енчен кĕмĕл уйăх тухрĕ. Вăрмантан тавраннă чухне çамрăксене унта кайнă чухнехи пек хулран хул перĕнсе утма май килмерĕ: тулли карçинккасем чăрмантарчĕç. Сывлăш çавăрса илме чарăнсан Çерук тантăшĕнчен чеен çапла ыйтрĕ:

− Кала-ха, Марьеçĕм, сана Мирун хăш çăлтăра татса пама пулчĕ?

Марье ахăл-ахăл кулса ячĕ. Унтан ассăн сывласа илчĕ те пусăрăнчăк сасăпа çапла пĕлтерчĕ:

− Çăлтăр татса парасси патне çитесси аякра-ха...

Ялти шкултан вĕренсе тухнă хыççăн Мирун пĕр кунхине урампа иртсе пыратчĕ. Марьесен картишĕнчен тăват-пилĕк çулти вăр-вар хĕрача чупса тухрĕ те Мируна сарă конверт тыттарчĕ.

− Марье аппаран салам! − йăл кулчĕ çара уранскер, çав самантрах ури тупанĕсене çиçтере пачĕ.

Çын курмарĕ-ши тесе Мирун ун-кун пăхкаласа илчĕ, унтан çырăва хăвăрт хĕвне чикрĕ. Çав хушăра ăна хăй килĕштерекен хĕр пăхса тăнине хапха хушăкĕнчен тĕшмĕртмерĕ те. Çамрăкăн чĕри хăвăрт-хăвăрт тапрĕ. Хĕври конверт ăна çулăмлантарсах ячĕ. Унта мĕн пуррине пĕлес шутпа Мирун кĕç-вĕç чупма пуçласшăн килне васкарĕ.

Килĕнче вăл асамлă конверта хыпалансах хĕвĕнчен кăларса сĕтел çине хучĕ. Конвертăн сулахай кĕтессине тирпейлĕн утмăл турат çыпăçтарнă.

Кăвак чечекпе юнашар пысăк саспаллисемпе кăвак чернилпах çапла çырса хунă: «Пĕрле вĕреннине ĕмĕр асра тытмалăх пĕчĕкçĕ парне». Конвертран ырă шăршă çапать. Духи сапнă пулинех. Мĕн-ши унта? Уçмасăрах паллă: кăшăркка хутпа чĕркенĕ темĕнле çепĕç япала. Вăт телей! Хĕртен парне илессинчен пысăкрах савăнăç пулма пултараймастех. «Тăхта! − сасартăк чарчĕ Мируна шалти туйăмĕ конверта уçма. − Ку саманта уçăмлатма телейлĕрех вăхăт тупăпăр!»

Мирун пӳрт маччи çине хăпарчĕ те пысăк савăнăç кӳнĕ конверта чи çӳлти кашта çумне çын курмалла мар хĕстерсе хучĕ. Çакăн хыççăн вăл икĕвисĕ кун хăпартланулла кăмăлпа çӳрерĕ. Висĕ кунран мачча çине тепре хăпарчĕ. Телей конверчĕ хăй вырăнĕнчех. Унран паха шăршă та сĕврĕлсе пĕтмен-ха. Мирун конверта каллех вырăна хучĕ, хăйне мĕнле парне кĕтнине тата каярах пĕлме шухăшларĕ. Парни ытла та пысăк пĕлтерĕшлĕ çав. Ăна курасса кĕтме те хĕпĕртӳллĕ.

Тепĕр эрнерен Мирун каллех мачча çине хăпарчĕ. Ак тамаша: конверт хăй вырăнĕнче çук! Кашта тăршшĕпех матрӳшке курăкĕ çакса тухнă. Чей вĕретме ĕнтĕ. Амăшĕ Патирек енчи хĕртнăран татса килнĕ пулмалла. «Турăçăм, ăçта кайса кĕнĕ ман парне! Тупасчĕ ăна, тупасчĕ!» − хуйха ӳксех шырарĕ конверта Мирун. Тем чухлĕ шырасан та тупаймарĕ. Таçта çĕтнĕ, адресне хăвармасăр çухалнă.

Конвертра мĕн пулнине пĕлес умĕнхи савăнăçлă кунсенче Мирун парне параканĕ çинчен мансах кайрĕ темелле. Çемьере аслă ывăла вĕренме ăçта ярасси пирки тавлашуллă калаçусем пула-пула иртетчĕç.

− Кирек мĕн калăр та, Мирунăн вĕренӳ вырăнĕ − Сĕнтĕрвăрринчи вăрман техникумĕ. Унтан вĕренсе тухсан хăть Шăмалак дачин лесничийĕ пулса тăр, хăть малалла Йошкар-Олана техника институтне çул тыт, − хăйĕннех перетчĕ ашшĕ. Ун шучĕпе, çут тĕнчере вăрмантан хакли нимĕн те çук. Йывăç лартса ӳстерессинчен сăваплăрах ĕç пулма та пултараймасть. Анаткасра пусăх пулнă май кашни кил умне пилĕк-ултă тополь ларттарчĕ. Чăн ĕнтĕ, пĕр хупăрламасăр лартнисене качакасем кăшласа хăртрĕç, сухаллă çав тăрлавсăрсенчен пĕчĕкçĕ картасем туса хӳтĕленĕ хунавсем вара чипере ӳсрĕç. Русакассин кăнтăр енче, Шăнкăртам хĕррине, Яков Пожеданов йĕкелтенех çĕре яхăн яхтă ӳстерчĕ. Вăхăт çитсен вĕсенчен чип-чиперех ката вăрман пулса тăрĕ.

Марьесем пĕтĕм çемйипех ялтан тухса шăвăнас умĕн пулчĕ-ха ку калаçу. Мирун пĕр каçхине, малтанах калаçса татăлнă пулин те, Русакассине тĕл пулăва вăхăтра пырса çитеймерĕ − йĕтем çинчи ĕç вăраха тăсăлни чăрмантарчĕ. Хĕр çакăншăн каччăна ӳпкелемесĕр ирттермерĕ.

− Шаннă йăвара кайăк чăнахах çук иккен. Паттăр рыцарь Русакассине пачах манса кайма та пултарать-ши? Тен, манăн шанчăклă рыцарь пулма та килĕшместĕн? − шап-шурă тикĕс шăлĕсене кăтартрĕ Марье. − Эпĕ вара сан ытамунта пулма яланах хатĕр!

Çапла каларĕ те Мирунăн кăкăрĕ çумне йăпшăнчĕ. Ун çумĕнче шăппăн-шăппăн сăвă каларĕ:

Савасси чун-чĕререн
Пытăрахчĕ ĕмĕре!
Ан иккĕлен: эпĕ сан!
Эсĕ те пулсамччĕ ман!

− Кала-ха, утмăлтуратăм, ăçтан тупрăн ку сăвва? − ыйтрĕ йĕкĕт.

− Пĕлместĕп çав, хăв тавçăр... − хуравларĕ Марье. Ку йĕркесене хĕр хайланине йĕкĕт пĕлмесĕрех юлчĕ.

− Утмăлтурат хӳхĕм ӳснĕ çул тырă аван пулать теççĕ. Ку çултаlăк юратăва та ăнăçу кӳтĕрччĕ! − пĕлтерчĕ хăйĕн шухăшне йĕкĕт.

− Утна кĕнеке çинче ан лар − Русакассси çинчен манса кайăн! − шӳтлереххĕн сĕнĕччĕ ун чухне йĕкĕте Марье.

Халĕ хĕре тусĕ çапла калĕччĕ: «Утна хула сывлăшĕпе ан сывла. Анаткас çинчен манса кайăн!» Çук çав, ку сăмахсене ун патне мĕнле çитермеллине пĕлмест. Мĕн тăвать-ши халĕ пике Ленинградра: вĕренет-ши е ĕçлет-ши? Тухтăра тухма ĕмĕтленетчĕ вĕт. Шел, хăйĕн юратăвĕ хурçăран та çирĕппине ĕнентерме май килмерĕ Мируна. Апла тенĕрен-ха, сывпуллашу сăмахĕсем те калаймарĕ-çке. Хире утмăлтурат пит пуссассăн ăна ют хире ăсатаççĕ, тенĕччĕ пĕррехинче аслашшĕ Мирун. Ку утмăлтуратăн ют хулана никам ăсатмасăрах, хăй тĕллĕн, тухса кайма тиврĕ. Таçтан пĕлнĕ Çерук Закускина: халĕ Хадаровсем Ленинградра имĕш.

* * *

Çын шăпи апла та, капла та килсе тухма пултарать çав. Кĕтмен çĕртен инкек сиксе тухасса Çерук пачах кĕтменччĕ. Педагогика училищинчен вĕренсе тухсан Таяпара учительте пĕр çултаlăк чиперех ĕçлерĕ. Вĕренӳ çулĕ пуçланса вĕçленичченех те хăйĕн класĕнчи ачасене «иккĕ» паллă лартмарĕ. Пĕлмесен тепре ыйтатчĕ. Шкулта çамрăк тĕрĕçĕсен кружокне йĕркелерĕ. Çакă ăна пĕтĕм шкул умĕнче чапа кăларчĕ.

**/Малалли çитес номерте/.**

**ТЕАТР**

# Халăх чунне çĕклентернĕшĕн

**Иртнĕ эрнере «Чĕнтĕрлĕ чаршав» конкурс çĕнтерӳçисене вунултăмĕш хут чысларĕç. Ăна яланхи пекех Пĕтĕм тĕнчери театр кунĕнче − пуш уйăхĕн 27-мĕшĕнче − пĕтĕмлетрĕç.**



ЧР культура министрĕ Вадим Ефимов, ЧР Театр ĕçченĕсен союзĕн председателĕ Геннадий Медведев уяв ячĕпе саламларĕç. Лауреатсене палăртас умĕн Вырăс драма театрĕнчи Антонина Баулина ячĕпе ăшă сăмахсем каларĕç. Чăваш халăх артистки сцена çинче 55 çул хушшинче çĕршер сăнар калăпланă. Вăл çуралнă кунне шăпах театр кунĕнче паллă тăвать. Кăçал Антонина Николаевна 88 çул тултарчĕ. Режиссерсем актриса валли театрта ятарласа спектакльсем лартаççĕ.

«Çултаlăкри чи лайăх спектакль» ята Пукане театрĕн сцени çине кăларнă «Ночь перед Рождеством» /режиссерĕ Юрий Филиппов/ спектакль тивĕçрĕ. «Ачасен чи лайăх спектаклĕ» номинацие виççĕмĕш çул Иосиф Дмитриев /Çеçпĕл Мишши ячĕллĕ çамрăксен театрĕ/ палăрчĕ. Хальхинче «Кот в сапогах» юмахшăн хисепе тивĕçрĕ вăл.

«Чи лайăх сценографи» номинацире Чăваш патшалăх академи драма театрĕнче лартнă «Синкерлĕ шăпа» драмăн ӳнерçи Светлана Зверева çĕнтерчĕ.

«Спектакльти чи лайăх музыка» номинацире Юрий Григорьев композитора çитекен пулмарĕ. Вăл Чăваш патшалăх пукане театрĕн сцени çине кăларнă «Ночь перед Рождеством» спектакле хитре кĕвĕпе илемлетнĕ.

«Эпизодри чи лайăх роль» ята кăçал Раççей тава тивĕçлĕ, Чăваш халăх артистки Валентина Смирнова тивĕçрĕ. Вăл «Нарспи» оперăра Сетнер амăшне вылянă.

«Хĕрарăм рольне чи лайăх калăплакан» номинацие икке пайланă кăçал. Пĕри − Чăваш академи драма театрĕнчи «Синкерлĕ шăпа» спектакльте вылякан Елизавета Хрисанфова /Лисави/, тепри − Вырăс драма театрĕнчи «Бабочка, бабочка...» трагикомедири тĕп сăнара калăпланă Чăваш халăх артистки Татьяна Яфанова /Эдда/. Савăннипе тата çак çĕнтерӳ пачах кĕтмен çĕртен пулнипе Елизавета Хрисанфова сцена çинче йĕмесĕр чăтаймарĕ. Артистка çак роле хăйне шанса панăшăн режиссера чунтан тав турĕ. «Синкерлĕ шăпа» спектакльте Лисави сăнарĕпе куракансен чунне витерне вăл. Савăнтарнă та, куççуль те кăларттарнă.

«Арçын рольне чи лайăх калăплакан» номинацире те иккĕн çĕнтерчĕç кăçал.

Оперăпа балет театрĕ хатĕрленĕ «Нарспи» оперăра Сергей Кузнецов тата Чăваш академи драма театрĕ лартнă «Синкерлĕ шăпа» спектакльте Сергей Павлов арçын рольне чи лайăх вылянă. С.Павлов мала тухнăшăн тивĕçекен укçана Шупашкарти пĕр ача çуртне пачĕ.

Кăçал уява Чăваш патшалăх сăнав театрĕн артисчĕсем йĕркелерĕç. Вĕсем тăрăшнипе зала пухăннисем тĕнче уçлăхне те «çитсе курчĕç», тĕрлĕ планетăпа, унта пурăнакансемпе» паллашрĕç, вĕсен юрри-ташшине киленчĕç.

Тĕп номинацисемсĕр пуçне уявра ятарлă Дипломсемпе укçан премисем те пулчĕç.

**Елена АТАМАНОВА.**



# Лолита анатомийĕ

## Паллă юрăç – "кĕрепле", туйăмсем тата Украина çинчен

**"Украина çинчен эпĕ çапла шухăшлатăп – халăх Майдана чăтăмĕ пĕтнипе тухнă. Олигархсем вара çакăнпа усă курнă..." – Лолита Милявская политика курăмне çапла палăртать.**

**– Лола, санăн çĕнĕ "Анатоми" альбомри пур юрă та тенĕ пек – арçынпа хĕрарăм çинчен. Хĕрарăм тени, сана ĕненес тĕк, арçынсăр пурăнаймасть те иккен. Пурăнма кăна мар, асапланать çеç. Мана туйăнать кăна-и е чăнах та çапла-и – анчах та арçын тени хăй çумĕнче хĕрарăм çуккине çăмăлрах чăтса иртterет.**

– Тĕрĕс мар. Хĕрарăм – арçынсăр, арçын хĕрарăмсăр пурăнаймасть. Ку кăна та мар-ха. "Кăвакки" теме хăнăхнине те хĕрарăм кирлĕ. Мĕншĕн-и? Ара, унсăрăн кама евĕрлĕ вăл? Манăн юрăсен альбомĕ чи малтанах шăпах – арçынсем валли. Хĕрарăмсене лайăхрах ăнланччăр тесе. Пире "мĕнпе пуçса çимеллине" лайăххрах пĕлчĕр тесе. Çапла, пирĕн те гормонсем выляççĕ. Тĕрĕсех, пирĕн кăмăл-туйăм таканари шыв пекех улшăнса тăрать. Çавăнпах арçынсем пирĕн пирки хушăран ăсран тайăлнă тесе пĕтĕмлетеççĕ-тĕр. Анчах та ку апла мар...

> **"ЭПĔ ÇĔНĔ ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔНЧЕ КĂТАРТАКАН ЮН КÿЛЛИСЕНЕ ПĂХАЙМИ ПУЛСА ÇИТРĔМ".**

### Йĕмне хыврăм...

**– Çав вăхăтрах эсĕ: "Эпĕ унăн йĕмне хыврăм, унта вара юрату çук, унта вара чун çук. Эпĕ алăпа та тытрăм, пурпĕрех, шел, пулмарĕ", – тесе юрлатăн. Арçын чунсăр вылькăх иккенне черетлĕ хут ĕнентересшĕн-и-ха çапла каласа?**

– Пачах апла мар. Альбомри кашни юрă ар хутшăнăвĕн тĕрлĕ тапхăрне сăнлать. Вăл юрă шăпах – хĕрарăм арçынран укçа, машина, çĕрĕ, тумтир йышăнни пирки. Тĕрĕссипе, ăна урăххи кирлĕ пулнă.

**– Урăххи мĕн-ши вăл?**

– Чуптуни, сăмахран, çепĕç сăмах, ачашлăх, алăран çавăтăнса çÿрени, вĕри туйăм, пĕр сăмахпа – юрату. Пĕр пĕлĕшĕм пур манăн. Пуян пурăнаççĕ вĕсем. Тĕлĕнмелле хитре хăй. Упăшкине те хăйĕн пекех илемлĕ ачасем çуратса панă. Мăшăрĕ парнеленĕ черетлĕ хаклă çĕррине туртса кăларать те ун çине пăхса куççуль тăкать. Арçыннăн, чăн та, пĕр вăхăт та çук – бизнес йăлт ĕмсе илет. Çавăнпа та уншăн юрату – хаклă парне пани. Пĕр сăмахсăр. Туйăмсăр. Укçаллă, влаçри арçынсем нумай чухне чăнласах туйăмлăха çухатаççĕ. Павлинсем пекех вĕсем. Юнашар хĕрарăма та асăрхамаççĕ. Шел те, çав вăхăтрах эпир те питĕ нумай йăнăш тăватпăр. Нумай чухне тав тума пĕлместпĕр. Упрама пĕлместпĕр. Çухатсан кăна ахлатса яратпăр, шеллетпĕр, тав тума ыткăнатпăр... Анчах та кая юлнă ĕнтĕ. Пирĕн кашнийĕнех хăйĕн кĕрепли пур. Пирĕнтен кашниех ун çине вăхăт-вăхăт темиçе хут та пусать.

**– Эсĕ мĕнле кĕрепле çине пусатăн?**

– Хамăрăн ТСЖпа вăрçă хирне тухнă чухне хам кампа çыхланнине пĕлмен-ха эпĕ. 2,5 çул каялла пуçланчĕ ку. Коммуналлă тăкаксен вышкайсăр пысăк хакĕсемпе килĕшмесĕр суда таврăç çырса патăм эпĕ. Пĕр суд хыççăн – тепри... Шел те, эпĕ ЖКХ тытăмне выляса ямарăм та, анчах та çĕнтертĕм тесе те калаймастăп. Çапла, нумай хутчен тĕрлĕ шайри суд эпĕ тĕрĕссине йышăнчĕ. Анчах та халĕ... хама суда параççĕ. Манăн шухăшпа, ТСЖ – халăхран укçа сăптăрмалли гений шайĕнчи план. Санран темшĕн те укçа ыйтаççĕ. Эсĕ вара вĕсене пĕр сăмахсăр тÿлетĕн. 90-мĕш çулсенчи пек. Пирĕн пата хурахсем килетчĕç те: "Сирĕн пире çавăн чухлĕ тÿлемелле пулать", – тетчĕç. Юлашки квитанцие кăтартма пултаратăп /400 тăваткал метрлă хваттершĕн 2015 çулхи пуш уйăхĕн квитанцийĕ тăрăх – 51500 тенкĕ. – Ред./. Ку – чи пысăкки мар-ха. Эпĕ çав хваттере туяннă чухне унта батарейăсем те çукчĕ, юсав ĕçĕсем кăна пыратчĕç, анчах та лаптăка ăшăтнăшăн кашни уйăхрах укçа тÿлеттеретчĕç. Мĕн тăвăн? Тÿлеттĕм.

Тепĕр чухне совет тапхăрне ырăпа аса илетĕп. Пĕр-пĕр çăхав тупăнсан реакци пулатчĕ. Паян чиновниксем нимĕнрен те хăраман пек туйăнать. Турра курман – унран çавăнпа шиклenмеççĕ. Президентпа вĕсенчен хăшĕпĕри, тен, тĕл пулнă та, анчах та пурпĕр хăрамаççĕ. Коммуналлă çаратăва малашне те чармасассăн пирĕн çынсем те, Украинăри пекех, урама тухма, пăлхав çĕклеме пултараççĕ. Капла та йĕри-тавра ... /Лолита çак вырăнта усал сăмах çатлаттарса хурать. – Ред./. Эпĕ, сăмахран, çĕнĕ хыпарсен кăларăмĕ кăтартакан юн кÿллине пăхайми пулса çитрĕм...

**...çав москаль-и?**

**– Эсĕ хăв та Украинăра çуралнă вĕт-ха. Аннÿпе хĕрÿ халĕ те Киевра пурăнаççĕ. Унти лару-тăру, тен, саншăн ăнланмалларах? Мĕн пулса иртет?**

– Нарăс уйăхĕнче манăн Львов хулинче пулса курма тÿр килчĕ. Шел, хурлăхлă сăлтавпа – юлташăма, рок-музыканта Кузьма Скрябина пытартăмăр /Андрей Кузьменко. – Ред./. Çула тухиччен пĕрле вĕреннĕ тантăшсем пурте тенĕ пекех: "Хăрамастăн-и?" – тесе ыйтрĕç. Вĕсене кура хам та шикленме пуçларăм. Тен, мана чăнах та "сикменни москаль мар-и?" туйăмпа йышăнĕç? Анчах та мăшăрпа иксĕмĕре те питĕ кăмăллăн кĕтсе илчĕç! Националистсене асăрхамарăм та. Курайманлăх туйăмне те никам та палăртмарĕ. Пачах тепĕр май, урамра ман пата пĕр арçын пычĕ те вăйлă палăракан украин акценчĕпе: "Сирĕн Путин – маттур!" – терĕ.

Эпĕ Украина пирки çапла шухăшлатăп. Халăхăн чăтăмĕ пĕтнĕ – мĕншĕн тесен вĕсене влаç нумай çул саратса пурăннă. Майдана çавăнпа тухнă вĕсем. Олигархсем вара, ытти чухне вĕсем халăх çине сурнă лайăх кăна, çакăнпа усă курнă. Украинăра влаçа вăйлă, ăслă-пуçлă, интеллигентлă çын аллине парас килет. Халĕ вара унта мĕн пулса иртет? Йĕри-тавра – йĕркесĕрлĕх, ăратсăрлăх: чун енĕпе те, этемлĕх тĕлĕшпе те. Ку çынсем ырăпа усала та уйăрса илме пĕлмеççĕ. Тепĕр тесен, вĕсене уйăрмаççĕ те вĕсем.

**– Апла тăк Украина халăхĕ мĕншĕн олигархсене хирĕçлесе тепĕр хут Майдана тухмасть?**

– Майдан миçе хут пулма пултарать вара? Çынсем ывăнмаççĕ пулĕ тетĕр-им? Эпĕ акă ТСЖпа çапăçса еплерех ывăнса çитрĕм. Пушшех те, халĕ пеме те пултараççĕ. Львовра Кузьмана пытарнă чухне çăва çинче çĕнĕ 100-е яхăн виltăпри асăрхарăм. 18-20-25 çулсенчи каччăсем... Венокĕсем пурин те пĕр пек. Темĕнле хуранран тухнă тупă какайĕ ахăр... Çавăнпа та эпĕ Львов вăрçа сивлениne ăнланатăп. Никам та вăрçасшăн мар унта.

Пиччепе мăшăрĕ Голландире 20 çул ытла пурăнаççĕ. Çур çул каялла вĕсенчен ыйтрăм: "Мĕнле эсир унта?" Вĕсем вара ырăнти халăх Раççее хирĕççине пĕлтереççĕ. Голландире пире хирĕçле агитаци пырать-мĕн. Вырăссем пирки агрессорсем, тăшмансем, çĕршыв хăрушсăрлăхне пĕтерес текенсем теççĕ. Телее, тепĕр çур çултан хăйсемех шăнкăравларĕç. Халăх шухăш-кăмăлĕ улшăннă иккен, вĕсем вырăссене ăнланма пуçланă: Раççей – усалах мар, Америка вара пуринпе те усă курать... Нимĕнле контрпропагандăсăрах пулса иртнĕ çакă – вăхăт кăна кирлĕ пулнă.

/«Аргументы и факты»/.

**ПĔЛЕТĔР-И?**

# Паллă çынсем... ватăлмаççĕ

**Кирек камăн та ватăлнăçемĕн ăс-тăн çивĕчлĕхĕ чакать. Хăшпĕр çын 60 çулалла çывхарнă тĕле тайăлма пуçлать, тепри ĕмĕрĕпех тăрă пуçпа пурăнать. Мĕнпе çыхăннă-ши сăлтавĕ?**

Этем организмĕ пĕтĕмĕшле ватăлать – пур орган та. 35-40 çулта нейронсем пĕтĕмĕшле вилме пуçлаççĕ. 70-е çывхарнă тĕле çапла вĕсене çухатнине пула пуç мими хухать, ун вырăнне шĕвек йышăнать. Çак улшăну астăвăма начар витĕм кÿрет, кăмăл-туйăм та хавшать.

Альцгеймер е Паркинсон чирне пула та чакать пуç мими калăпăшĕ. Ытттисемшĕн вара çулсем иртни ăс-тăн çивĕчлĕхĕпе пачах та çыхăнмалла мар пек. Апла тăк мĕн пулса иртет?

### Пĕр çулталăк – пиллĕк вырăнне

Аслă çултисен пуç мимири улшăнусем ытларах чухне юн çаврăнăшĕн чирĕсемпе çыхăннă. Çакăншăн атеросклероз айăплă. Унпа вара кĕрешме пулать. Çуллă çимелле мар, пăлханмалла мар, тăраничен çывăрмалла. Пуç мимине таса мар сывлăшпа шыв та, чĕлĕм туртни те, вăраха кайнă чирсем те начар витĕм кÿреççĕ. Чи хăрушă тăшманĕсем, паллах, наркотик тата алкоголь. Вĕсемпе туслă çын çулталăкра пиллĕк çул çухатать. Пуç мимине ватăласран сыхлама пулать-и? Паллах. Аптекăсенче ку енĕпе темĕн тĕрлĕ эмел те пур. Анчах та сывă çыннăн вĕсемпе туслашма кирлĕ мар. Вĕсем – юн çаврăнăшĕ пăсăлнипе аптракансем валли.

### Пуç мими юратăвĕ

Ватăлас килмесен пуç мимине ытларах ĕçлеттермелле – çавă кăна. Паллах, ытларах хусканмалла. Виçине пĕлсе çимелле: тăрук нумай çисе лартни те, выçă çÿрени те пĕр пекех сиенлĕ уншăн. Глюкоза кирлĕ тени – тĕрĕсех мар. Пуç мими тутлипе йÿççине уйăрмасть. Пултарулăх çыннисен пуç мимийĕ чĕрĕрех. Пушшех те – вĕсен пултарулăхне тивĕçлипе хакланă пулсан. Çавăн пекех классика юрă-кĕвви усăллă. Пулă, пахча çимĕç, улма-çырла, пăтă ăс-тăна аван витĕм кÿреççĕ. Пуç мимине юнпа туллин тивĕçтерме пулăшаççĕ вĕсем.

- Ытларах вулама тăрăшăр. Кăткăс каларăшсем пуç мимине сирпĕтсех яраççĕ, çапла вара çывăракан лаптăксем те вăранаççĕ.
- Ют чĕлхе вĕренĕр – ватлăха пăхмасăр.
- Пуçватмăш, шахмат сĕтел çинчен ан таталтăр.
- Хăнăхман çулпа та утăр.
- Хваттерте куçа хупса çÿрĕр.
- Эсир сылтăм алăпа ĕçлетĕр тĕк сулахаййине те хута ярăр – пуç мимин тепĕр енĕ те ĕçлеме пуçлĕ.



# И-ХИ-ХИК

Арăмĕ – упăшкине:
– Пирĕн кӳршĕ каллех тĕрмере пулас.
– Мĕншĕн ун пек шухăшлатăн?
– Эпĕ упăшки хăçан таврăнасси пирки унăн арăмĕнчен ыйтрăм та, календарь çине пăхса шутлама пуçларĕ...

* * *

– Итле-ха, санăн полицире паллакан пур-и кам та пулин?
– Пур.
– Мĕн тăвать унта вăл?
– Иккĕмĕш уйăх камерăра ларать.

* * *

– Кинемей, санăн ку кăмпа мĕн хак?
– Виççĕр тенкĕ.
– Эсĕ мĕн, ăсран тайăлнă-им? Иртнĕ эрнере кăна виçĕ хут йӳнĕрехчĕ.
– Эсĕ доллар хакланнине илтмен-им?
– Эсĕ вара кăмпуна чикĕ леш енчи вăрмантан пухса килтĕм тесшĕн мар пулĕ-çке?

* * *

– Шкула эсир мĕншĕн юрататăр? – ыйтать вĕрентекен ачасенчен. – Виçĕ сăлтав калăр-ха?
– Çĕртме, утă, çурла уйăхĕсемшĕн...

* * *

Суд пырать. Айăплă тесе шанман çынна тĕпчеççĕ. Лешĕ каласа кăтартать:
– Çав кун киле иртерех таврăнтăм. Арăм алăка час уçмарĕ. Шала кĕрсенех вăл урăхларах сывланине туйрăм. Аха! Апла тăк вăл урăх арçынпа пулнă. Уçă чӳрече патне чупса пытăм та хайхискер труççи вĕççĕнех тарнине куртăм. Алă айне мĕн лекнĕ – çавăнпа яра патăм: тумбочкăпа.
Пĕрремĕш кӳнтелен каласа кăтартнинчен:
– Эпĕ сывă пурнăç йĕркине пăхăнатăп. Чупатăп çапла пĕррехинче урампа. Пуç тăррине тумба мĕнле вĕçсе анчĕ! Пĕтĕм шăм-шак хуçăлса пĕтрĕ. Аран чĕрĕ юлтăм.
Тĕп кӳнтелен каласа кăтартнинчен:
– Ларатăп пĕрре çапла тумбочкăра...

* * *

Физкультура учителĕ ачасемпе ятлаçать:
– Урока тăхăнса килме форма çук сирĕн. Урам тăрăх вара Адидас тăхăнса каппайса çӳретĕр!

* * *

Ирсерен чупма тĕв турăм. Пĕр-икĕ çухрăм аванах хыçа хăвартăм-ха. Каялла киле таврăнма кăна такси чĕнме тиврĕ.

* * *

Ача чухне Хура тинĕс хĕррине çитсе курасси илĕртетчĕ. Халĕ-и? Ĕмĕтсем хамăрпа пĕрлех ӳссе пыраççĕ. Халĕ чĕрĕ жираф утланса ярăнса курас килет!

* * *

Тунтикун çитни кăмăла пăсать-и? Канмалли кунсăр ĕçлĕр.

* * *

Укçапа уйрăлма йывăр теççĕ. Килĕшес килмест кунпа – унпа тĕл пулма тата йывăртарах.

* * *

Ирхине арăмĕ – упăшкине:
– Кĕçĕр кевĕр мăй çыххи тĕлленсе выртнă. Мĕне пĕлтерет-ши?
– Каçхине пĕлĕн, – ăшшăн чуптăвать упăшки.
Каç пулать. Хĕрарăм упăшкине кĕтсе уяв сĕтелĕ хатĕрлет – ара, ахальтен мар ĕнтĕ ытла та ăшшăн сывпуллашнă вăл ирпе. Какай ăшалать. Çурта çутать. Хăй хитре тăхăнать, сăрланать, çӳçне майлаштарать. Акă упăшки таврăнать. Аллинче – курупка. Ăна арăмне тыттарать. Хĕрарăм уçать. Унтан вара кĕнеке тухать: "Тĕлĕк пĕлтерĕшĕсем"...

* * *

– О, Хĕрлĕ Калпак! Карçинккунта кукăль пур-и-ха?
– Пур, Кашкăр, пур! Ме, çи.
– Алло! Анне-и? Кукăль çиет-ха вăл. Пăхкаларăм – аптрамасть пек. Çук, çăмĕ тăкăнмасть. Икĕ калпак тухать.

* * *

Ирхине телефонпа смс килчĕ. "Ĕнерхи каç хыççăн сана манаймастăп". Çакă кăна кăсăклă – эпĕ вара аса илейместĕп...

* * *

Ултă çул... Ултă çул туртман, ĕçмен, хĕрсем пирки вара шухăшламан та! Анчах мана анне пĕрремĕш класа çавăтса кайрĕ... Пуçланчĕ вара!

* * *

Эпĕ бокс секцине çырăнтăм, пичче – кĕрешӳ секцине. Халĕ иксĕмĕр пачах та тавлашмастпăр...

* * *

Пире бумеранг кирлĕ мар – пирĕн кĕрепле пур.

* * *

Ирех тăракан... пурне те тарăхтаракан: алăка шаплаттарать, савăт-сапапа кĕмсĕртеттерет, слон пек çӳрет!

* * *

Вовочка:
– Анне, мана шкултан кăларса ячĕç.
– Мĕншĕн, ывăлăм?
– Пĕлместĕп. Ахăртнех, штата кĕскетрĕç пуль...

* * *

Пĕрин будильникĕ ĕçлеме пăрахнă. Хайхи ăна юсама илсе каять. Мастерскойĕнче йышăнаççĕ. Уçса пăхаççĕ те шалта вилĕ таракан кураççĕ.
– Ку будильника юсама çук – пурпĕрех ĕçлемĕ урăх, – пĕтĕмлетеççĕ хайхисем.
– Мĕншĕн?
– Механикĕ вилнĕ...

* * *

– Санăн пиччӳ мĕншĕн пирĕн пата килсе çӳреме пăрахрĕ? – ыйтать общежити коменданчĕ студенткăран.
– Урăх йăмăк тупнă пуль...


## РЕКЛАМА ТАТА ПĔЛТЕРӲСЕМ

### ТУЯНАТĂП КУПЛЮ

**18.Бычков, тёлок, коров, лошадей.** Т. 8-962-599-47-06.
**39.Коров, бычков и лошадей.** Т. 8-960-310-98-78.
**109.Бычков, тёлок, коров, свиноматок.** Т. 8-937-014-49-97.

### ĔÇ РАБОТА

**126.Монолитчики,** плотники, **монтажники,** шлифовщики, **каменщики,** сварщики. Питание, спецодежда. Вахта. Т. 8-925-002-22-38.
**215.Требуется сиделка** по уходу за бабушкой **в Батыревском р-не.** Т. 8-927-847-62-61.

### ПУЛĂШУ УСЛУГИ

**38.Чистка колодцев.** Т. 89613429059.
**51.Бурение колодцев,** скважин, кольца колодезные высококачественные. Доставка. Тел.: 8-927-847-71-43, 8-937-379-00-80.
**152.Бурение скважин** на воду. Т. 89603021293.
**171.Кровельные, фасадные работы.** Т. 8-903-322-04-79.
**197.Бурение скважин на воду.** Опыт, качество. Т. 89656876888.

### СУТАТĂП ПРОДАЮ

**4.Немецкие ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Низкие цены. Пенсионерам скидки. Замер. Доставка – бесплатно. Без вых. **Т. 8-987-576-65-62.**
**5.Блоки керамзитобетонные** 20х20х40, 12х20х40, 9х20х40 пропаренные, гидровибропрессованные заводские от производителя – недорого, **цемент, песок.** Доставка. Разгрузка. Без выходных. Кассовый чек, документы. Т. 8-960-301-63-74.
**6.ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА, ВИТЫЕ ТРУБЫ.** Т.: 89278441501, 674642.
**7.Гравмассу, песок, щебень, керамзит.** Дёшево. Д-ка. Т. 38-97-13.
**8.Гравмассу,** песок, **щебень,** торф, кирпичный бой, **керамблок, керамзит.** Пенсионерам, уч. ВОВ – скидки. Т. 8-905-199-01-22.
**10.Сетку-рабицу** от производителя – более 80 видов, сетку сварную – более 30 видов, **профнастил,** гвозди, **столбы,** проволоку. Изготовление ворот, калиток. Доставка. Выездная сварка /генератор/. Грузоперевозки. Т.: 68-05-67, 34-70-70.
**11.Срубы для бани.** Т. 37-28-74.
**21.Керамблоки, гравмассу, песок.** Т.: 89033456307, 89176757528.
**23.Гравмассу, песок,** бой кирпича, **щебень.** Д-ка. Т. 89061355241.
**24.ГРАБЛИ,** косилки, **сажалки,** копалки, **окучники, опрыскиватели.** Доставка. Т. 89278533596.
**26.КЕРАМБЛОКИ** /20х20х40, 12х20х40, 10х20х40/, **керамзит** в мешках, **цемент,** кирпич, **к/кольца.** Доставка. Т. 89033468556.
**30.Гравмассу, песок, щебень, керамзит.** Д-ка. Т. 89053465671.
**31.Гравмассу, песок, керамзит,** кирп. бой. Д-ка. Т. 89033225766.
**48.Керамблоки, бой** кирпича, бетона; сваи, **ОПГС,** песок, **ФБС.** Т. 89063814420.
**58.Гравмассу, щебень, песок, керамзит,** бетон, чернозём. Д-ка. Недорого. Т. 89276687015.
**74.Керамблоки вибропрессованные, пропаренные.** Все размеры. Доставка. Т. 8-917-677-68-46.
**89.БЛОКИ керамзитобетонные** от производителя. Высокое качество. Низкие цены. Доставка. Документы. Т. 89373866629.
**123.Гравмассу, песок, навоз.** Доставка по старым ценам. Т. 8-927-850-28-21.
**127.ТЕПЛИЦЫ из поликарбоната** от производителя. Т. 8-919-679-47-04.
**128.ТЕПЛИЦЫ из поликарбоната** от производителя. Т. 8-927-667-62-02.
**133.СЕТКУ-РАБИЦУ** от производителя около 100 видов, **сетку** сварную, кладочную, штукатурную; **проволоку,** столбы. Доставка. Т.: 68-30-45, 8-937-952-22-11.
**138.ОКНА, ТЕПЛИЦЫ, обшивка** домов, **двери** /сталь/. Гарантия 15 л. Скидки 40 %. Т. 89196624097.
**143.ТЕПЛИЦЫ** от производителя – от 5950 руб. Т. 89276682828.
**170.Профнастил, метоллочерепицу, сайдинг.** Т. 89033220479.
**172.Тротуарные ПЛИТЫ, брусчатку.** Доставка, укладка. Скидки. Гарантия. Т. 89033220479.
**174.МОГИЛЬНЫЕ ОГРАДЫ, заборы, ворота** и др. изделия от производителя Т. 89276682828.
**180.Отруби, зерно, к/корм,** сахар, муку. Доставка. Т. 89373916016.
**205.Цемент,** песок, **гравмассу,** щебень, **керамзит, блоки.** Д-ка. Т.: 89278497675, 89278497674.


## ПĔЛЕТĔР-И?

# Кăмăла... сиплет

**Пусăрăнчăк кăмăла паянхи чăн-чăн эпидемипех танлаштараççĕ. Медицина ăна хăйĕн мелĕсемпе сиплет. Çав вăхăтрах чире хамăр та ирттерме пултаратпăр.**

Тарăхăва, вĕчĕрхенĕве лăплантарма **чикен курăкĕпе мăкăнь** вăрри пулăшать. Вĕсене пĕр тан виçепе илмелле те иçĕм сĕткенне /кăмăла кура/ ямалла. Пĕчĕк çулăм çинче 10-15 минут вĕретмелле. Сивĕнсен сăрăхтармалла та çывăрас умĕн пĕчĕкшерĕн ĕçмелле. Ăшăлла 1-2 чей кашăкĕ пыл хушса сăйланма та юрать.

**Алоэ** те паха витĕмлĕ. Ăна аш арманĕпе авăртмалла та пылпа /1:6 виçепе/ хутăштармалла. Кунне 3-4 хутчен çуршар чей кашăкĕ ĕçмелле.

**Пĕтнĕк** курăкĕпе шыва пĕр тан виçепе илмелле те 10 минут вĕретмелле. Шĕвеке ир-каç ĕçмелле.

**Пыл** та кăмăла уçма пулăшать. Ăна çывăрас умĕн ăшă шыва 1 апат кашăкĕ ярса пыл, лимон сĕткенĕ хушса ĕçмелле.

25 грамм вĕтетнĕ **сĕлĕ улăмне** çур литр шыва ярса çур талăк лартмалла. Сăрăхтармалла та кун каçа ĕçмелле.

**Паллăллă материалсене шӳт тесе йышăнмалла.**

### Иртнĕ номерте пичетленнĕ сăмах каçмăш хуравĕсем:

1. Салака. 2. Аргентина. 3. Айдак. 4. Кантата. 5. Атмосфера. 6. Аксакал. 7. Лачака. 8. Ананас. 9. Сантана. 10. Антоновка. 11. Асламас. 12. Сава. 13. Алабама. 14. Ашак. 15. Картина. 16. Агрегат. 17. Тара. 18. Арат. 19. Тарçă. 20. Ăста. 21. Атас. 22. Старт. 23. Трап. 24. Пакет. 25. Така. 26. Атака. 27. Аюдаг. 28. Горн. 29. Нара. 30. Атăл. 31. Лаша. 32. Авас.


«ХЫПАР»
Издательство çурчĕ" автономи учрежденийĕ

УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ: ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ИНФОРМАЦИ ПОЛИТИКИН ТАТА МАССĂЛЛĂ КОММУНИКАЦИСЕН МИНИСТЕРСТВИ, ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ИНФОРМАЦИ ПОЛИТИКИН ТАТА МАССĂЛЛĂ КОММУНИКАЦИСЕН МИНИСТЕРСТВИН "ХЫПАР" ИЗДАТЕЛЬСТВО ÇУРЧĔ" ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН АВТОНОМИ УЧРЕЖДЕНИЙĔ

Директор – тĕп редактор В.В.ТУРКАЙ

Çырăнмалли индекс: 11515

Редактор – М.М.ИЛЬИНА

Дежурнăй редактор – Е.М.АТАМАНОВА

Хаçата Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен тытăмĕнчи тĕрĕслев служби 2013 çулхи апрель уйăхĕн 30-мĕшĕнче ПИ № ФС77-54016 номерпе регистрациленĕ.



РЕДАКЦИПЕ ИЗДАТЕЛЬ АДРЕСĔ: 428019, Шупашкар хули, Иван Яковлев проспекчĕ, 13, Пичет çурчĕ
ЫЙТСА ПĔЛМЕЛЛИ ТЕЛЕФОНСЕМ: 55-07-21, 56-00-67, 56-03-54, 28-83-67, 28-85-33.
Факс: /8352/ 28-83-70, 56-20-07
Электрон почти: hypar@mail.ru



Хаçатри рекламăсăр тӳлевлĕ информаци материалĕсем "Реклама çинчен" Федераци саккунĕн 2 ст. килĕшӳллĕн **"Аталану çулĕпе", "Ят-сум", "Ĕç тата çын", «Самана таппи»** рубрикăсенче пичетленеççĕ.

Номере 27.03.2015 алă пуснă. Пичете графикпа 19 сехет те 30 минутра алă пусмалла, 19 сехетре алă пуснă.
Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» АУО типографийĕнче пичетленĕ. 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13.
56-00-23 – издательство директорĕ.
Тираж 8305. Заказ 1238.